К74.268.11
А65
4-41600

Е.А. Андреева, И.В. Николаева



# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ

## ТЕСТСЕН ПУХХИ

# 5 класс

Национальная библиотека ЧР
4-041600

**ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ**
**обозначенного здесь срока**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

К 74.268.11
К
Д 65
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛ.
ЭКЗЕМПЛЯР

Раççей Федерацийĕн Вĕрентӳпе ăслăлăх министерстви

Федераллă вĕрентӳ агентстви

Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ
«И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ»

## Е. А. Андреева, И. В. Николаева

# *ЧĂВАШ ЧĔЛХИ.*
# *5 КЛАСС.*
## *ТЕСТСЕН ПУХХИ*

Шупашкар
2008

УДК 809. 43 : 378. 16
ББК 81.635.1я72
А 655

Андреева, Е. А. Чăваш чĕлхи. 5 класс. Тестсен пуххи : вĕрентӳпе меслетлĕх пособийĕ / Е. А. Андреева, И. В. Николаева. – Шупашкар : И. Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУ, 2008. – 72 с.

И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕн ăслăлăх канашĕ пичете сĕннĕ

*Редактор*
филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Л. П. Сергеев профессор

*Рецензентсем:*
Игнатьева В. И. доцент, педагогика ăслăлăхĕсен кандидачĕ, ЧППУ чăваш чĕлхине вĕрентес меслетлĕх кафедрин ертӳçи;
Виноградов Ю. М. доцент, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ, ЧПВИ чăваш чĕлхипе литератури кафедрин ертӳçи.

Вĕрентӳпе меслетлĕх пособийĕнче тестсен тĕсĕсене, вĕсемпе мĕнле усă курмаллине кĕскен çырса кăтартнă тата пиллĕкмĕш класра вĕренекенсен чăваш чĕлхи пĕлĕвне тĕрĕслемелли тестсене йĕркелесе панă.

ПРОВЕРЕНО
20 10

© Андреева Е. А., Николаева И. В., 2008

ч-41600
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Аслă професси пĕлĕвĕ паракан патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ «И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ», 2008

# КӮРТĔМ

Чăваш чĕлхи наци шкулĕсен пуçламăш тата вăтам класĕсенче вĕрентӳ, ăс-тăн пару никĕсĕ, унăн тĕп хатĕрĕ шутланать. Çав хатĕрпе ача вĕренӳре туллин усă курма пултартăр тесен унăн пуплевĕпе шухăшлавне пур енлĕн аталантармалла. Пуплевĕн тĕп ĕçĕ-хĕлĕсене аталантарси чăваш чĕлхине вĕрентни çинче никĕсленсе пулса пырать.

Хальхи вăхăтра чăваш чĕлхине вăтам классенче вĕрентнин тĕп тĕллевĕ – ачасен пуплевне якатса пуянлатасси, вĕсене хăйсен шухăшне çыхăнуллă çырса е сăмах вĕççĕн палăртма хăнăхтарасси, чĕлхепе усă курса информаци пухма вĕрентесси, тăван халăхăн пуян историйĕпе, культурипе паллаштарса ăша хывтарасси. Ку ĕçе тĕрĕс пурнăçласси чи малтан учительтен килет. Вĕрентекенĕн ачасене пĕлӳ пухма пулăшмалла çеç мар, ăна вăхăтра тĕрĕслесе тăмалла. Учитель çак ĕçе тĕрлĕ мелсемпе усă курса пурнăçлама пултарать. Çак мелсене икĕ ушкăна уйăрма пулать: йăлана кĕнисем (ыйтса калаттарни, диктантсем, изложенисемпе сочиненисем çыртарни) тата пĕлĕве çĕнĕлле тĕрĕслеме май параканнисем (тестсем).

Сăнаса тишкерӳсем тунă хыççăн эпир çакна палăртма пултаратпăр: йăлана кĕнĕ тĕрĕслев мелĕсем пур чухне те учителе ачан пĕлĕвне туллин хаклама май параймаççĕ, ача вĕрентӳ процесĕн хăш тапхăрĕнче такăннине кăтартма пултараймаççĕ. Пĕлĕве тĕрĕсленĕ чух тестсемпе усă курни чылай чухне пысăк пулăшу парать тата чăваш чĕлхине вĕрентес ĕçе нумай çăмăллатать, çĕнĕлĕх кĕртет. Çав вăхăтрах ачасен вĕренес кăмăлне хăпартать, вĕсен пĕлĕвне пур енлĕн тĕрĕслеме пулăшать, вĕрентекенĕн вăхăтне перекетлет. Ку ĕçе компьютерпа усă курса ирттерни вара ăна тата çӳллĕрех шая çĕклет. Хальхи вăхăтра шкул ĕçĕнче тест формипе пĕлĕве тĕрĕслес ĕçре тăтăшах усă

кураççĕ (Пĕрлехи Патшалăх экзаменĕ т. ыт. те.), мĕншĕн тесен тест ачасен пĕлĕвне тĕрлĕ енчен хăвăрт хаклама пулăшать.

Тестсен тытăмĕ, вĕсенчи ыйтусем тĕрлĕрен. Пĕлĕве тестсемпе тĕрĕсленĕ чух вĕрентĕвĕн тапхăрне те, ачасен çул ÿсĕмне те, вĕсен пĕлÿ шайне те шута илмелле.

Тестсемпе пĕр-пĕр уйрăм темăна, е пĕтĕмĕшле пысăк пая вĕренсе пĕтернĕ хыççăн, е чĕрĕк, е çур çул, е пĕтĕмĕшле вĕренÿ çулĕ вĕçĕнче усă курма юрать.

Кĕнекери тестсем 5 класра вĕренекенсен чăваш чĕлхи пĕлĕвĕ мĕнле шайра пулнине тĕрĕслеме май параççĕ. Пирĕн шутпа, ку тестсемпе вăтам шкулта та, аслă шкул та чăваш чĕлхине вĕрентнĕ чух усă курма пулать.

## I. ТЕСТ – ПĔЛĔВЕ ТĔРĔСЛЕМЕЛЛИ МЕЛ

Хальхи вăхăтра ачасен пĕлĕвне тестсемпе усă курса тĕрĕслесси Чăваш Республикинче йăлана кĕчĕ ĕнтĕ. Ытти мелсемпе танлаштарсан пĕлĕве баллсемпе усă курса хаклани вĕрентӳ тапхăрĕ мĕнле шайра пынине тарăнрах ҫутатса парать. Тĕслĕхрен, ача «Сăмах майлашăвĕ» темăна ăнланман тесе калас вырăнне учитель ача «Сăмах майлашăвĕ» темăпа панă ҫичĕ ыйтуран иккĕшне ҫеҫ хуравланă теме пултарать.

Апла пулсан, ют ҫĕршыв вĕрентекенĕсем усă куракан балл ачасем хушшинче тестсем ирттернипе тачă ҫыхăнса тăрать. Вĕсем тĕрлĕрен пулаҫҫĕ: хакланă чухне паллă пулнă информацие цифрăсемпе палăртни е пачах та палăртманни (палăртнин тĕллевĕ ҫук).

Тест хуравĕсем ытлашши пысăк вырăн йышăнмаҫҫĕ. Чи малтан учителĕн танлаштару туса ирттермелле. Вăл вара икĕ тĕрлĕ пулать: 1) тест балĕсене урăх ҫынсен ҫак тестпах пухнă балĕсемпе танлаштарни (тĕслĕхрен, вĕренме кĕнĕ чухне); 2) тест результатне улшăнман стандартпа танлаштарни (тĕслĕхрен, тĕрĕслев тесчĕ).

Тестсем темиҫе тĕрлĕ те пулаҫҫĕ: нормативлисем, критериллисем, стандартлисем.

Ачан балĕсене пĕр-пĕр ушкăнри ҫынсен балĕсен вăтам кăтартăвĕпе танлаштарса ирттернĕ теста **нормативлă** теҫҫĕ. Тепĕр майлă каласан, ҫак теста хуравланă ҫынсен вăтам кăтартăвĕ норма пулса тăрать. Ку норма вара ҫак ушкăнри хуравсен типлă шайĕ пулать. Пĕр ҫын пухнă баллсене нормăпа танлаштарнă хыҫҫăн учитель вăл е ку ачан балĕсен шучĕ нармăран пысăк е пĕчĕк пулнине пĕтĕмлетет.

Вĕрентӳ системинче результатсене шайлаштарас ĕҫре пурĕ виҫĕ тĕп нормативлă ушкăн уйăраҫҫĕ:

1-мĕш ушкăн – класс, темиçе класс е шкул (тĕслĕхрен, чăваш чĕлхине вĕренекенĕн пĕлĕвне класри ытти ачасемпе е çав предметах вĕренекен темиçе класрисемпе танлаштарни);

2-мĕш ушкăн – район шкулĕсем (вĕренекен балĕсене районти унпа пĕр çулти ытти вĕренекенсен балĕсемпе танлаштарни);

3-мĕш ушкăн – хулари, облаçри шкулсем, патшалăхăн вăтам кăтартăвĕсем (пĕрлĕхи патшалăх экзаменĕ).

<u>Нормативлă тестсен лайăх енĕсем:</u>

- ыйтусем ачасен нумай енлĕ пултарулăхне хăвăрт тĕрĕслеме май параççĕ;

- кун йышши тестсем пысăк тата йывăртарах чĕлхе материалне тĕрлĕ майсемпе вĕреннĕ чух тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ;

- пултаруллисене суйлама пулăшаççĕ.

<u>Нормативлă тестсен çитменлĕхĕсем:</u>

- хуравсем ача тата йывăртарах материала вĕренме хатĕррине е хатĕр маррине кăтартса параймаççĕ;

- ачасен ăмăрту тата баллсене танлаштарас туйăмĕсене вăратаççĕ.

Ачан результатне пĕр улшăнман хатĕр стандартпа танлаштарамалли тестсене критериллĕ теççĕ. Вĕсем учителе ача çак вăхăтра мĕн пĕлнипе пĕлменнине тĕплĕн кăтартаççĕ. Тĕслĕхрен, пĕр-пĕр темăпа 20 тест ыйтăвĕ хатĕрленĕ. Çав ыйтусенчен вун çиччĕшне хуравланă пулсан вĕренекенĕн пĕлĕвĕ çителĕклĕ пулни курăнать. Критерисене палăртнă чух учитель ытти классемпе мĕнле ĕçленине те шута илет.

Стандартлă тестсене пуриншĕн те паллă нормăсем çине таянса хатĕрлеççĕ. Кун пек тестсене вĕрентӳ программин стандартне пăхăнса йĕркелеççĕ. Вĕсем вĕренекенĕн пĕлĕвĕн, пултарулăхĕн хăш-пĕр енĕсене тĕрĕслесе палăртмалли ĕçсен пуххи пулма пултараççĕ. Çак тестсемпе ачан пĕлĕвне тивĕçлĕ хаклаççĕ, пĕлӳ шайне баллсемпе е очкосемпе палăртаççĕ.

Стандартлă тестсем тĕрлĕрен пулаççĕ:

- пĕтĕмĕшле пĕлĕве тĕрĕслемеллисем;
- пултарулăха тĕрĕслемеллисем;
- диагностика тесчĕсем.

Ытларах чухне вĕрентекенсем ачасен пĕтĕмĕшле пĕлĕвне тата пултарулăхне тĕрĕслемелли тестсемпе усă кураççĕ.

**Пĕтĕмĕшле пĕлĕве тĕрĕслемелли** тестсем шутне вĕренӳ программинче палăртнă пĕр-пĕр темăпа е уйрăм пайпа çыхăннă ыйтусене кĕртеççĕ. Вĕсем вăл е ку класра вĕренекенĕн пĕлĕвне палăртма пулăшаççĕ. Учитель кун йышши тестсене пĕтĕм класпа е уйрăм ачапа ирттерме пултарать, ĕçе хакланă чух баллсемпе усă курать.

**Диагностика тесчĕсемпе** ытларах чухне вĕренекенсем вĕренӳ процесĕн хăш тапхăрĕнче такăннине палăртма усă кураççĕ.

**Пултарулăха тĕрĕслемелли тестсем** вара ачан малашлăхри ăнăçлăхне çутатса пама пулăшаççĕ. Енчен те пĕтĕмĕшле пĕлĕве тĕрĕслемелли тестсем ачан пĕр-пĕр темăпа çыхăннă пĕлĕвне палăртаççĕ пулсан пултарулăх тесчĕсем вăл малашне вĕренӳре еплерех ĕлкĕрсе пыма пултарнине курма пулăшаççĕ.

Тестсене йĕркелесе ирттернĕ чух ачасен пурин те пĕр пек условире пулмалла тата учительсен хăш-пĕр самантсене асра тытмалла:

1) ачасен кăмăл-туйăмне çĕклеме тăрăшмалла. Тестсене ирттерме пуçличчен класа уçăлтармалла, ачасемпе кăмăллăн калаçса ĕçре ăнăçу сунмалла, вĕсен ĕçлес кăмăлне вăратмалла;
2) тестсене еплерех хуравланине пăхса вĕренӳ çулне пĕтĕмлетнĕ чух ачасен вĕренес кăмăлне хуçма кирлĕ мар;
3) ĕçе пурнăçланă чух пӳлĕмре шăп пулмалла, кашни ачана хăйсем тĕллĕн тухăçлă ĕçлеме майсем туса памалла;
4) вĕрентекенĕн кашни ачана курса тăмалла, пĕр-пĕринчен çырса илме е пĕр-пĕринпе калаçса ларма ирĕк памалла мар.

Тестсене суйласа илнӗ тата ирттернӗ чух мӗне тӗрӗслеме пултарнине е пултарайманнине шута илмелле. Хуравсене хакланӑ чух та асӑрханулла пулмалла, мӗншӗн тесен тест кӑтартӑвӗ ачан ҫырнӑ вӑхӑтри пӗлӗвне ҫеҫ хаклать.

Ачасен пӗлӗвне тӗрӗслемелли мелсем нумай (диктант, изложени, ыйту-хурав, сочинени т. ыт. те), анчах хальхи вӑхӑтра вӗрентӳ процесӗнче ҫак ӗҫе компьютерпа усӑ курса йӗркелесси пысӑк вырӑн йышӑнма пуҫларӗ. Тестсене компьютерпа хуравлаттарни пӗр енчен учителӗн ӗҫне ҫӑмӑллатать, тепӗр енчен ачасене тата аванрах вӗренме хавхалантарать.

Компьютерпа усӑ курнин лайӑх енӗсем шутне ҫаксене кӗртме пулать:

- ачан ӗҫне мӗнле хакласси учительтен пачах та килмест;
- ачан пӗлӳ кӑтартӑвне тата унӑн вӗренӳ шайне тӗрӗс ҫутатса парать;
- компьютер ачан ӗҫне тӳрех хаклать, ҫапла майпа вӗрентекенӗн вӑхӑтне перекетлет;
- кӗске вӑхӑтрах пӗр е темиҫе класра вӗренекенсен пӗлӗвне тӗрӗслеме май парать;
- ача компьютер лартса панӑ паллӑпа тавлашаймасть т. ыт. те.

Пирӗн шутпа, чӑваш чӗлхине вӗрентнӗ чух ачасен пӗлӗвне тестсемпе усӑ курса тӗрӗсленин пӗлтерӗшӗ пысӑк, ҫавӑнпа та вӗрентӳ процесӗнче ку формӑпа тӑтӑшах усӑ курмалла.

## II. ЧĂВАШ ЧĔЛХИ ПĔЛĔВНЕ ТĔРĔСЛЕМЕЛЛИ ТЕСТСЕМ

Ачана вĕрентес ĕç вăтам шкулта 11 çула тăсăлать. Çак вăхăтра вĕрентекенĕн ăна патшалăх стандарчĕ кăтартнă чухлĕ пĕлӳ памалла, çав пĕлӳ шайне вăхăтра тĕрĕслесе тăмалла. Учитель çак ĕçе вĕреннĕ темăпа килĕшӳллĕ тестсем ирттерсе йĕркелесе пыма пултарать.

Программăра палăртнă тăрăх, 5-мĕш класс пĕтернĕ çĕре ачасен çакна пĕлмелле:

- сасăпа саспаллине уйăрма, сасăсене ушкăнлама (уçă сасăсем, вĕсен ушкăнĕсем; хупă сасăсем, вĕсен ушкăнĕсем);
- хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхне, янăравлăхĕпе янăравсăрлăхне, вăрăмлăхне çырура палăртма;
- вырăсларан йышăннă сăмахсенче уçă сасăсене (трактор, кофе, парта) тата хупă сасăсене (бригада, журнал, депо, циркуль, адъютант т. ыт. те) тĕрĕс палăртма;
- тăван сăмахсемпе вырăс чĕлхинчен йышăнакан сăмахсене тĕрĕс ударенипе калама (ачасем – ачасем мар, портфель – портфельте, конференцире, делегатсем);
- сăмах пĕлтерĕшĕсене (паллăраххисене) ăнлантарма;
- синонимсем, антонимсем, омонисем тупма;
- вĕреннĕ материалпа çыхăннă орфограммăсемпе пункто-граммăсене тупма, сăмахсене мĕнле çырмаллине тата чарăну паллисене мĕншĕн лартмаллине ăнлантарма;
- иккĕмĕшле (çĕнĕ) сăмахсене пĕрремĕшлисенчен, сăмах тăвакан аффикссене (иккĕленӳсĕррисене) сăмаха улăштараканнисен-чен уйăрма;
- сăмахсене (уйрăмах хушаматсене) алфавит йĕркипе вырнаçтарма;
- тĕрлĕ словарьсемпе усă курма;
- текст планне тума, текстăн темипе тĕп шухăшне палăртма;

- текст содержанине кĕскен тата тĕплĕн каласа пама;

- таврари япаласене е чĕр чунсене сăнласа пама (çырса е сăмах вĕççĕн), пурнăçри пулăмсем е ĕç-пуç çинчен мĕн шутланине ăслама;

- шухăша йĕркипе, вĕçе-вĕçĕн каласа е çырса пама, пĕр-пĕр сăмахпа вĕçĕмсĕр усă курассинчен хăтăлма.

## 2.1. СИНТАКСИС. ПУНКТУАЦИ

### Предложени, унăн членĕсем. Пĕр йышши членсем, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси

I. 1. Вуласа тухăр.

*Çур çул <u>иртрĕ</u> <u>Паймуш</u> Ĕшнекасран киле таврăнать вăл сылтăм аллинчи пĕчĕк чăматанне сулласа васкаса утать.*

*(Л. Таллеров.)*

1) Миçе предложени пулнине палăртăр.

а) 1; ă) 2; б) 3; в) 4.

2) Палăртнă сăмахсем предложенин мĕнле членĕсем пулаççĕ?

а) сказуемăй, определени; б) определени, подлежащи;

ă) сказуемăй, подлежащи; в) сказуемăй, дополнени.

2. Вуласа тухăр.

*Пĕррехинче <u>мулкач</u> йывăç айĕнче лăпкăн çывăрнă хĕвел ăна <u>ăшăтнă</u> мулкач шыв хăпарма пуçланине те туйман вăл хăй айне шыв кĕре пуçласан çеç вăраннă.*

*(В. Бианки.)*

1) Миçе предложени пулнине палăртăр.

а) 1; ă) 2; б) 3; в) 4.

2) Палăртнă сăмахсем предложенин мĕнле членĕсем пулаççĕ?

а) дополнени, подлежащи; б) подлежащи, сказуемăй;

ă) определени, подлежащи; в) дополнени, сказуемăй.

3. Вуласа тухăр.

*<u>Шăши</u> çерçие хăвалама шутламан тавлашнăшăн çеç кулянна <u>вăл</u> хăйĕн тырă пĕрчисене шăтăка йăтса тултарнă.*

*(Удмурт халăх юмахĕнчен.)*

1) Миçе предложени пулнине палăртăр.

а) 1; ă) 2; б) 3; в) 4.

2) Палăртнă сăмахсем предложенин мĕнле членĕсем пулаççĕ?

а) подлежащи, сказуемăй; б) подлежащи, подлежащи;

ӑ) сказуемӑй, дополнени; в) дополнени, подлежащи.

II. 1. Предложенисенчи подлежащипе сказуемӑя тӗрӗс палӑртӑр.

*Анчах шыв хӑпарнӑҫем хӑпарнӑ. Утрав пӗчӗкленсех пынӑ.*

*(В. Бианки.)*

а) шыв – подлежащи, утрав – подлежащи, пынӑ – сказуемӑй;

ӑ) хӑпарнӑ – сказумӑй, утрав – подлежащи, пынӑ – сказуемӑй;

б) шыв – подлежащи, хӑпарнӑҫем хӑпарнӑ – сказуемӑй, утрав – подлежащи, пӗчӗкленсех пынӑ – сказуемӑй;

в) шыв – подлежащи, хӑпарнӑ – сказуемӑй, утрав – подлежащи, пынӑ – сказуемӑй.

2. Предложенисенчи подлежащипе сказуемӑя тӗрӗс палӑртӑр.

*Ҫуллахи вӑхӑтра ял ир вӑранать. Кӑшт ҫутӑлсанах автансем тӗрлӗ сасӑпа пӗр-пӗринпе ӑмӑртмалла авӑтма тытӑнаҫҫӗ. (В. Бианки.)*

а) ял – подлежащи, вӑранать – сказуемӑй, автансем – подлежащи, тытӑнаҫҫӗ – сказуемӑй;

ӑ) ял – подлежащи, ир вӑранать – сказуемӑй, автансем – подлежащи, тытӑнаҫҫӗ – сказуемӑй;

б) ир – подлежащи, вӑранать – сказуемӑй, ҫутӑ – подлежащи, автансем – подлежащи, авӑтма тытӑнаҫҫӗ - сказуемӑй;

в) ял – подлежащи, ир вӑранать – сказуемӑй, автансем – подлежащи, авӑтма тытӑнаҫҫӗ – сказуемӑй.

3. Предложенисенчи подлежащипе сказуемӑя тӗрӗс палӑртӑр.

*Эпӗ кӳлӗ хӗрринче кунӗпех ҫӳрерӗм. Каҫалапа чӗпӗсем каллех вӗҫсе килчӗҫ, анчах ман ҫывӑха урӑх пымарӗҫ.*

*(Д. Гордеев.)*

а) эпӗ – подлежащи, ҫӳрерӗм – сказуемӑй, чӗпӗсем – подлежащи, пымарӗҫ - сказуемӑй;

ӑ) эпӗ – подлежащи, ҫӳрерӗм – сказумӑй, чӗпӗсем – подлежащи, вӗҫсе килчӗҫ, пымарӗҫ – сказуемӑй;

б) эпĕ – подлежащи, çӳрерĕм – сказуемăй, чĕпĕсем – подлежащи, вĕçсе килчĕç - сказуемăй;

в) эпĕ – подлежащи, çӳрерĕм – сказуемăй, чĕпĕсем – подлежащи, килчĕç, пымарĕç – сказуемăй.

III. 1. Предложенири пĕр йышши членсене тупса палăртăр.

*Пакша йывăç турачĕсем çинче уплюнкка, мăйăр кăмпи, мăк кăмпи типĕтсе хĕлле валли хатĕрленет.*

*(Н. Матвеев.)*

а) уплюнкка, мăйăр кăмпи, мăк кăмпи;

ă) уплюнкка, йывăç турачĕсем;

б) уплюнкка, пакша, мăйăр кăмпи, мăк кăмпи;

в) пĕр йышши членсем çук.

2. Предложенири пĕр йышши членсене тупса палăртăр.

*Авăн уйăхĕн малтанхи кунĕсенчех хăмăш кайăкĕ, шăна кайăкĕ, чĕкеç вĕçсе каяççĕ.* *(Н. Матвеев.)*

а) хăмăш кайăкĕ, шăна кайăкĕ;

ă) шăна кайăкĕ, чĕкеç;

б) хăмăш кайăкĕ, шăна кайăкĕ, чĕкеç;

в) хăмăш, шăна, чĕкеç.

3. Предложенири пĕр йышши членсене тупса палăртăр.

*Кăнтăр çилĕ кăтра хурăнсене, яштак ăвăссене, мăнаçлă юмансене лăпкăн ачашлать.* *(Н. Матвеев.)*

а) хурăнсене, ăвăссене;

ă) ăвăссене, юмансене;

б) хурăнсене, ăвăссене, юмансене;

в) кăнтăр, яштак, мăнаçлă.

## Сăмах майлашăвĕ

I. 1. Панă тĕслĕхсенчен хăшĕ сăмах майлашăвĕ пулмасть?

а) кĕркунне çитрĕ; б) кăнтăралла вĕçтерчĕ;

ă) ăшă çанталăк; в) парне парнелерĕ.

2. Панă тĕслĕхсенчен хăшĕ сăмах майлашăвĕ пулмасть?

а) чашлаттарса çăвать; б) чашлаттарса çумăр çăвать;

ă) кăнтăрлахи хĕвел; в) çăл патне пычĕ.

3. Панă тĕслĕхсенчен хăшĕ сăмах майлашăвĕ пулмасть?

а) шыв тумламĕ; б) тăп-тăрă шывра;

ă) кĕнеке тытрăм; в) эпĕ ларатăп.

II. 1. Панă сăмах майлашăвĕнче ăнлантару сăмахĕ мĕнле ыйтура тăрать?

*кăнтăрлахи хĕвел*

а) хăçан? б) камăн?

ă) хăçанхи? в) ăçти?

2. Панă сăмах майлашăвĕнче ăнлантару сăмахĕ мĕнле ыйтура тăрать?

*варкăштарса килчĕ*

а) мĕнле? б) ăçтан?

ă) хăçан? в) мĕн?

3. Панă сăмах майлашăвĕнче ăнлантару сăмахĕ мĕнле ыйтура тăрать?

*нÿхрепсене хураççĕ*

а) мĕн? б) ăçта?

ă) мĕнрен? в) ăçталла?

III. Текста вуласа тухăр.

*Умра симĕс тулă ани хумханать. Пĕр тикĕс, çăра. Пучахĕсем шултра, вăрăм. Ача чухнех юрататтăм эпĕ ансăр сукмакпа çÿллĕ ыраш ани тăрăх утма. Пăхатăн – пур енчен те тикĕс тырă ешерсе ÿсет.* *(А. Медведев.)*

1. «Паллă ячĕ + япала ячĕ» сăмах майлашăвне тупăр.

а) симĕс тулă; в) пур енчен;

ă) пĕр тикĕс; б) ача чухнех.

2. «Япала ячĕ + япала ячĕ» сăмах майлашăвне тупăр.

а) тикĕс тырă; б) тулă ани;

ă) пучахĕсем шултра; в) симĕс тулă.

3. «Глагол + глагол» сăмах майлашăвне тупăр.

а) умра хумханать; б) сукмакпа утма;

ă) ешерсе ӳсет; г) ани хумханать.

## Сăнлав. Калав. Ăслав

I. 1. Панă текстăн тĕсне палăртăр.

*Шуршăл çав тери хитре вырăнта вырнаçнă. Сăрт çинче те, сăрт айккинче те çуртсем. Ял урамĕсем тирпейлĕ, ешĕл йăмраллă. Çывăхрах çырансемпе улăхсем, вăрман. Çавал шывĕ те ял çумĕпех юхса выртать.* *(Ю. Мишши.)*

а) ăслав; б) калав;

ă) сăнлав; в) пĕри те тĕрĕс мар.

2. Панă текстăн тĕсне палăртăр.

*Ачасем ашшĕ пахчана укçа пытарса хунă пулĕ тесе шухăшланă. Вĕсем ашшĕ вилсен пĕтĕм пахчине чавса шыранă, ура пусмалăх вырăн та хăварман.*

*(Чăваш халăх юмахĕнчен.)*

а) ăслав; б) калав;

ă) сăнлав; в) пĕри те тĕрĕс мар.

3. Панă текстăн тĕсне палăртăр.

*Чакак этеме, çут çанталăка самаях усă кӳрет. Уй-хирте, вăрманта вăл шăшисем нумай тытать. Хуртсем, нăрăсем, çав шутра тыр-пулшăн питĕ сиенлисене те, чылай пĕтерет.*

*(Ю. Мишши.)*

а) ăслав; б) калав;

ă) сăнлав; в) пĕри те тĕрĕс мар.

## Хутсăр предложени

I. 1. Панă тĕслĕхсенчен хăшĕ предложени пулмасть?

а) Пирĕн ялта;

ă) Пирĕн ялта пурăнаççĕ вĕсем;

б) Тутарсемпе чăвашсем пурăнаççĕ;

в) Аван, ырă, чун канать.

2. Панă тĕслĕхсенчен хăшĕ предложени пулмасть?

а) Куршанак çыпçăннă;

ă) Ял халăхĕ;

б) Чăтма çук шăрăх;

в) Эпĕ ултă çулта çеç пулнă.

3. Панă тĕслĕхсенчен хăшĕ предложени пулмасть?

а) Ванюк – чăваш каччи;

ă) Кĕрт хĕвсе каять;

б) Çĕре сăрхăнса кĕрет;

в) Каччă килĕшрĕ.

## Калуллă, ыйтуллă, хистевлĕ предложенисем. Кăшкăруллă предложени

I. 1. Ваттисен сăмахĕсене вуласа тухăр.

*(1) Тытман кайăкăн тĕкне ан тат.*

*(2) Ĕçлекен çын выçă вилмест.*

*(3) Паян тумалли ĕçе ырана ан хăвар.*

*(4) Ĕçчен ал валли ĕç тупăнать.*

*(5) Çулла çуна, хĕлле урапа хатĕрле.*

*(6) Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ пур.*

*(7) Кив пўрте пăсиччен çĕннине ларт.*

1) Калуллă предложенисене палăртăр.

а) 1, 2, 6; ă) 2, 3, 7; б) 2, 4, 6; в) 1, 5, 6, 7.

2) Хистевлĕ предложенисене кăтартăр.

а) 1, 3, 6; ă) 1, 3, 5, 7; б) 2, 3, 4, 7; в) 1, 2, 7.

2. Ваттисен сӑмахӗсене вуласа тухӑр.

*(1) Кайма ӳркенмен пырне тӑрантарнӑ.*

*(2) Упине тытмасӑр тирне ан сут.*

*(3) Шӑлтӑр-шӑлтӑр урапа нумая пымасть.*

*(4) Ҫын япалине ан хапсӑн.*

*(5) Хӑвӑнне ан пар, ҫынӑнне ан ил.*

*(6) Ҫырлана пиҫсе ҫитсен тин татаҫҫӗ.*

*(7) Тӳшекне кура уруна тӑс.*

2) Калуллӑ предложенисене палӑртӑр.

а) 1, 3, 6; ӑ) 2, 3, 7; б) 2, 4, 6; в) 1, 5, 6, 7.

2) Хистевлӗ предложенисене кӑтартӑр.

а) 1, 3, 6; ӑ) 2, 4, 5, 7; б) 2, 3, 4, 7; в) 1, 2, 7.

3. Ваттисен сӑмахӗсене вуласа тухӑр.

*(1) Вут хутмасӑр тӗтӗм тухмасть.*

*(2) Мӗн каланине суя ан ту.*

*(3) Ҫӑкӑра чӑмласа ҫи, сӑмаха шухӑшласа калаҫ.*

*(4) Шӑртласа пӗтерсен тылламаҫҫӗ.*

*(5) Ачине тупмасӑр кипкине ан хатӗрле.*

*(6) Ваттисем калани вырӑнлӑ.*

*(7) Чӗлхеллӗ ҫын Чӗмпӗре ҫитнӗ.*

3) Калуллӑ предложенисене палӑртӑр.

а) 1, 2, 6; ӑ) 1, 4, 6, 7; б) 2, 4, 6; в) 1, 5, 6, 7.

2) Хистевлӗ предложенисене кӑтартӑр.

а) 1, 3, 6; ӑ) 2, 3, 5; б) 2, 3, 4, 7; в) 1, 2, 7.

II. 1. Предложенири палӑртнӑ сӑмахсене тӗрӗс ыйту парӑр.

*Аран-аран ҫитрӗ вӑл <u>вӑрман хӗррине</u>.*

(*«Тӑван Атӑл» журналтан.*)

а) Мӗнле ҫитрӗ вӑл вӑрман хӗррине?

ӑ) Кам аран-аран ҫитрӗ вӑрман хӗррине?

б) Ӑҫта ҫитрӗ вӑл аран-аран?

Ч-41600
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

в) Мĕншĕн çитрĕ вăл вăрман хĕррине?

2. Предложенири палăртнă сăмаха тĕрĕс ыйту парăр.

*Хĕлле юр уй-хирти <u>калчана</u> шăнасран лайăх упрать.*

*(Л. Таллеров.)*

а) Хăçан юр уй-хирти калчана шăнасран лайăх упрать?

ă) Хĕлле юр ăçти калчана шăнасран лайăх упрать?

б) Мĕн тăвать хĕлле юр уй-хирти калчана?

в) Хĕлле юр уй-хирти мĕне шăнасран лайăх упрать?

3. Предложенири палăртнă сăмахсене тĕрĕс ыйту парăр.

*<u>Сивĕ, çиллĕ</u> çанталăкра юр пĕрчисене çил вĕçтерет.*

*(Л. Таллеров.)*

а) Мĕнле çанталăкра юр пĕрчисене çил вĕçтерет?

ă) Хăçан юр пĕрчисене çил вĕçтерет?

б) Мĕнсене сивĕ çанталăкра çил вĕçтерет?

в) Мĕн тăвать çил сивĕ çанталăкра?

III. 1. Предложенисен вĕçне мĕнле чарăну палли лартмаллине калăр.

*Эй, атьсемри Талккишĕпех шап-шурă юр*

*(«Çил çунат» хаçатран.)*

а) ?, !; ă) !; .; б) !, ?; в) ., !.

2. Предложенисен вĕçне мĕнле чарăну палли лартмаллине калăр.

*Тĕлĕннипе элĕ ахлатса ятăм Çав лÿппер кахал кайăк та çавнашкал çивĕч пулма пултарать-и*

*(Н. Сладков.)*

а) ?, .; ă) !; ?; б) ., ?; в) !, ?!.

3. Предложенисен вĕçне мĕнле чарăну палли лартмаллине калăр.

*Мĕнле çитмелле-ши унта Хĕрача кухньăри сĕтел çине хăпарса пăхрĕ*

*(П. Можаев.)*

а) ?, .;  ă) !; ?;  б) ., ?;  в) !, ?!.

### Текст. Унăн пайĕсем

I. 1. Панă предложенисенчен çыхăнуллă текст йĕркелĕр.

*(1) Вăл час çĕрмест, çурт-йĕр таврашĕнче çĕр-çĕр çул хушши çирĕппĕн тăрать.*

*(2) Пирĕн вăрманти йывăççене урăх çĕр-шывсене те ярса тăнă.*

*(3) Чăваш юманĕ писĕ те çирĕп.*

*(4) Мускавпа Питĕрти керменсене ĕлĕкхи вăхăтра та час-часах чăваш юманĕсенчен тунă япаласем илемлетнĕ.*

*(5) Унтан кермен çуртсен урайĕсене сармалли паркет, хаклă йышши сĕтел-пукан тата урăх япаласем тăваççĕ.*

*(Ç. Элкер.)*

а) 1, 3, 4, 2, 5;  б) 3, 2, 4, 1, 5;

ă) 3, 1, 5, 4, 2;  в) 1, 2, 5, 4, 3.

2. Панă предложенисенчен çыхăнуллă текст йĕркелĕр.

*(1) Эпир Кольăпа купа тăватпăр.*

*(2) Ешĕл утта йĕпетес мар тесе эпир пĕтĕм вăйран ĕçлеме тытăнтăмăр.*

*(3) Пĕр кунхине çапла кунĕпех утă пухрăмăр.*

*(4) Ĕç вĕресе çеç тăрать.*

*(5) Каç енне анăçра хура пĕлĕтсем курăнчĕç.*

*(6) Хĕрачасем кĕреплесемпе тураççĕ, арçын ачасем сенĕксемпе йăтаççĕ.*

*(П. Егоров.)*

а) 1, 3, 4, 2, 6, 5;  б) 3, 6, 2, 4, 1, 5;

ă) 3, 5, 2, 6, 1, 4;  в) 1, 2, 5, 6, 4, 3.

3. Панӑ предложенисенчен ҫыхӑнуллӑ текст йӗркелӗр.

(1) *Ҫӑмартине те таҫта тӑвать вӑл.*

(2) *Кайран кӗр енне виҫ эрне таҫта ҫӗтсе пурӑнчӗ те кӗтмен ҫӗртен пӗр пуслӑх чӗпӗ ертсе таврӑнчӗ.*

(3) *Хреҫҫи инкен пӗр хура чӑх пур.*

(4) *Пӗлтӗр те килте пӗр ҫӑмарта туман.*

(5) *Пӗрре те килте тӑра пӗлмест, кунӗпех урамра тек сӑхса ҫӳрет.*

(6) *Кӗрхи чӗпӗсенчен пӗри те пурӑнаймарӗ, пурте вилсе пӗтрӗҫ.*

(7) *Эх, тарӑхрӗ-ҫке ун чух Хреҫҫи инке.*

*(Ю. Скворцов.)*

а) 1, 3, 4, 6, 2, 7, 5;
б) 3, 5, 1, 4, 2, 6, 7;
ӑ) 3, 1, 7, 5, 6, 4, 2;
в) 1, 2, 6, 7, 5, 4, 3.

II. 1. Панӑ предложенисенчен икӗ ҫыхӑнуллӑ текст йӗркелӗр.

(1) *Лапка-лапка юр ҫунӑ хыҫҫӑн ачасем урама тухрӗҫ те каҫса кайсах выляма тытӑнчӗҫ.*

(2) *Акӑ кӑткӑ вӑранать те йӑваран аяккалла кайма тухать.*

(3) *Питӗ пысӑк юр купи турӗҫ.*

(4) *Унта пӗчӗккисем те тӑрӑшса ӗҫлерӗҫ.*

(5) *Кашни кӑткӑн хӑйӗн сукмакӗ пур.*

(6) *Ҫухалса каясран вӑл хӑйӗн мӑйӑхӗпе (уссипе) ҫула тӗрӗслесе пырать.*

(7) *Вӗсем пысӑккисене юр чӑмаккисем тӑва-тӑва пырса пачӗҫ.*

*(А. Лазарева, В. Козлов.)*

а) 1, 3, 4, 6; 2, 7, 5;
б) 1, 3, 4, 7; 2, 5, 6;
ӑ) 3, 1, 7; 5, 6, 4, 2;
в) 1, 2, 6, 7; 5, 4, 3.

2. Панӑ предложенисенчен икӗ ҫыхӑнуллӑ текст йӗркелӗр.

*(1) Анчах шыв хăпарнăçем хăпарнă.*

*(2) Эпĕ хускалмасăр пăхса ларатăп.*

*(3) Утрав пĕчĕкленсех пынă.*

*(4) Вĕсем мана асăрхарĕç пулин те вĕссе тарма шутламарĕç, кăшт кăна аяккарах пăрăнчĕç.*

*(5) Сасартăк çывăхрах пăшал сасси кĕрĕслетрĕ.*

*(6) Мулкач хăранипе утравăн пĕр вĕçĕнчен тепĕр вĕçне чупкаланă.*

*(7) Кайăк кăвакал чĕпписем кар-р! кăна çĕкленсе вĕçсе кайрĕç.*

*(В. Бианки, Г. Харлампьев.)*

а) 1, 3, 6; 2, 4, 7, 5; б) 1, 3, 4, 7; 2, 5, 6;

ă) 3, 1, 7; 5, 6, 4, 2; в) 1, 2, 6, 7; 5, 4, 3.

3. Панă предложенисенчен икĕ çыхăнуллă текст йĕркелĕр.

*(1) Пĕррехинче эпĕ вăрман хĕрринчи хӳтĕ кĕтесре ларатăм.*

*(2) Вăрмансем, улăх-çарансем, сад пахчисем ем-ешĕл-ха.*

*(3) Кĕр çитни ниçта та курăнмасть.*

*(4) Пăхатăп – кăткă тĕми çинче пилеш кайăкĕ сиккелесе çӳрет.*

*(5) Урипе ун тăррине салатать.*

*(6) Август уйăхĕн вĕçĕнче вара таврара такам асăрхануллăн утса çӳрени палăрчĕ.*

*(7) Сад пахчисенче те, вăрмансенче те вăл хăйĕн йĕрĕсене хăварма тытăнчĕ.*

*(В. Тимаков, В. Песков.)*

а) 1, 3, 4, 6; 2, 7, 5; б) 1, 4, 5, 7; 2, 3, 6;

ă) 1, 4, 5; 2, 3, 6, 7; в) 1, 2, 6, 7; 5, 4, 3.

## Текст теми, тĕп шухăшĕ

I. 1. Хăш предложенисем текстăн тĕп шухăшне палăртаççĕ?

*(1)Тĕревпе тĕрек*

*(2)Кӳршӗ ялта авал пӗр ват ҫын хӑйӗн икӗ ывӑлне нӳхреп тӳрлетме хушнӑ. (3)Нӳхрепне хӑй ҫамрӑк чухнех тунӑ пулнӑ. (4)«Эсир, ачасем, уратасене улӑштариччен, нӳхреп ишӗлсе анасран, вӑхӑтлӑха тӗревсем лартӑр». (5)Ывӑлӗсем: «Юрӗ», - тенӗ.*

*(6)Анчах, ашшӗ нӳхрепе анаймасса пӗлсе, вӗсем ҫапла юри ҫеҫ каланӑ: ӗҫе васкаса пӗтерес тесе, тӗревсем лартман. (7)Хӑйсем ашшӗнчен ахӑлтатса ҫеҫ кулнӑ.*

*(8)Ӗҫ вӗҫне ҫитесси нумаях та юлман – нӳхреп лаштӑр! ишӗлсе аннӑ...*

*(9)Ӗҫри йӗркесӗрлӗх инкексӗр пулмасть иккен. (10)Ҫамрӑксен ҫӑмӑлттайлӑхӗ – ваттисене йывӑрлӑх. (11)Ваттисем калани – тӗрек те, тӗрев те. (12)Вӗрентнине итлемесен пархатар ҫук.*

а) 1, 9; б) 1, 11;

ӑ) 1, 10; в) 11, 12.

2. Хӑш предложени текстӑн тӗп шухӑшне палӑртать?

*(1)Юпах тиха*

*(2)Юпах тиха кӑвак ҫутӑллах тӑнӑ тет те пуҫне каҫӑртса урампа пырать тет.*

*(3)«Ӑҫта каян?» - тесе ыйтрӗҫ тет унран.*

*(4)«Сухана!» - терӗ тет юпах тиха мӑнаҫлӑн пуҫне тата ҫӳлерех каҫӑртса.*

*(5)Хӗвел ансан юпах тиха ӗҫрен каялла таврӑнать тет. (6)Сӗлкӗшленнӗ тет хӑй, пуҫне уснӑ тет, сӗлтех кайнӑ тет, урисене аран-аран сӗтӗркелет тет. (7)Ку ытлашшипех йӑшнине асӑрхакансем чӑтса тӑраймасӑр унтан ыйтрӗҫ тет:*

*«Ӑҫтан таврӑнан?»*

*(8)«Сухаранччӗ те-ха...» - терӗ тет юпах тиха хӗвел ҫинче хытса куштӑрканӑ тутисене аран-аран хускаткаласа.*

*(9)Ӗҫӗн алли хытӑ ҫав. (10)Ҫакна ӗлӗк-авал пит лайӑх палӑртса хӑварнӑ ват асаттесем.*

а) 1; б) 10;

ӑ) 9; в) 8.

3. Хӑш предложени текстӑн тĕп шухӑшне палӑртать?

*(1)Пахчаҫӑпа ывӑлĕсем*

*(2)Ĕлĕк-авал пĕр ватӑ пахчаҫӑ ывӑлĕсемпе пурӑннӑ. (3)Пурнӑҫĕ ҫӑмӑл мар пулсан та, ашшĕ пур чух пурӑнкаланӑ-ха ачисем. (4)Ашшĕсĕр тӑрса юлсан вĕсем пуҫĕсене кӑна мар, аллисене те усасран хӑранӑ старик. (5)Ачисене пахча ĕҫне пĕчĕкренех вĕрентменшĕн пит ӳкĕннĕ.*

*(6)Пĕррехинче, ҫав тери хытӑ аптрасан, пахчаҫӑ ывӑлĕсене чĕннĕ те каланӑ:*

*- Ачамсем, эпĕ вилсен аҫӑр пехиллесе хӑварнӑ япалана улма пахчинче пурте пĕрле тӑрӑшса шырӑр. Пĕрле шырасан ҫеҫ ӑна тупма пултарӑр.*

*(7)Ачисем ашшĕ пахчана ылтӑн-кĕмĕл пытарса хӑварнӑ пулĕ тесе шутланӑ. (8) Ашшĕ вилсен вĕсем пĕтĕм пахчине чакаласа пĕтернĕ. (9)Чавса кӑпкалатман вырӑн хӑварман. (10)Вара ҫĕрĕ ҫемҫелнĕ те, пахча ҫимĕҫ ĕлĕкхинчен нумай тухӑҫлӑрах пула пуҫланӑ. (11)Пурнӑҫĕ те ерипен юсанса пынӑ.*

*(12)Ҫапла вара, ҫичĕ ывӑл ашшĕ пехиллесе хӑварнӑ мула тӑрӑшса шырани харама кайман. (13)Вĕсем ашшĕнчен юлнӑ пуянлӑха тупнӑ-тупнах. (14)Ку пуянлӑх – пĕрлĕхлĕ вӑй, мул вара – тӑрӑшса ĕҫлени.*

а) 1; б) 13;

ӑ) 6; в) 14.

## Предложенин тĕп членĕсемпе кĕҫĕн членĕсем. Ансӑр тата анлӑ предложенисем

I. 1. Предложенири сӑмахсен ҫыхӑнӑвне тĕрĕс ӳкернине кӑтартӑр.

*Ҫынсем пахчана ҫĕр улми кӑларма тухнӑ.*

*(«Тантӑш» хаҫатран.)*

а) ç̲ы̲н̲с̲е̲м̲ ——— т̲у̲х̲н̲ă̲.
пахчана каларма
çĕр улми

б) п̲а̲х̲ч̲а̲н̲а̲ ——— т̲у̲х̲н̲ă̲.
çынсем кăларма
çĕр улми

ă) ç̲ы̲н̲с̲е̲м̲ ——— т̲у̲х̲н̲ă̲.
пахчана кăларма
улми
çĕр

в) п̲а̲х̲ч̲а̲н̲а̲ ——— т̲у̲х̲н̲ă̲.
çынсем кăларма
улми
çĕр

2. Предложенири сăмахсен çыхăнăвне тĕрĕс ӳкернине кăтартăр.

*Вĕсен парка тураттисем хушшипе сенкер тӳпе курăнса каять.*

*(А. Лазарева.)*

а) т̲ӳ̲п̲е̲ ——— к̲у̲р̲ă̲н̲с̲а̲ ̲к̲а̲я̲т̲ь̲.
сенкер хушшипе
тураттисем
парка
вĕсен

б) т̲ӳ̲п̲е̲ ——— к̲а̲я̲т̲ь̲.
сенкер курăнса
тураттисем
вĕсен парка

ă) т̲ӳ̲п̲е̲ ——— к̲у̲р̲ă̲н̲с̲а̲ ̲к̲а̲я̲т̲ь̲.
сенкер хушшипе
тураттисем
вĕсен парка

в) т̲ӳ̲п̲е̲ ——— к̲у̲р̲ă̲н̲с̲а̲ ̲к̲а̲я̲т̲ь̲.
парка хушшипе
тураттисем
вĕсен сенкер

3. Предложенири сăмахсен çыхăнăвне тĕрĕс ӳкернине кăтартăр.

*Чакак этеме, çут çанталăка самаях усă кӳрет. (Г. Орлов.)*

а) ч̲а̲к̲а̲к̲ ——— у̲с̲ă̲ ̲к̲ӳ̲р̲е̲т̲.
самаях
этеме çанталăка
çут

б) ч̲а̲к̲а̲к̲ ——— у̲с̲ă̲ ̲к̲ӳ̲р̲е̲т̲.
этеме çанталăка самаях
çут

ă) ч̲а̲к̲а̲к̲ ——— к̲ӳ̲р̲е̲т̲.
усă самаях
этеме
çут çанталăка

в) ч̲а̲к̲а̲к̲ ——— к̲ӳ̲р̲е̲т̲.
усă самаях
этеме çанталăка
çут

II. 1. Предложенири хăш сăмах подлежащи пулать?

*Çуркунне вăрманти йывăççем пурте çара.*

а) çуркунне; б) пурте;

ă) йывăççем; в) йывăççем пурте.

2. Предложенири хăш сăмахĕ подлежащи пулать?

*Аннепе иксĕмĕр купăста йăранĕ турăмăр.*

а) аннепе иксĕмĕр; б) иксĕмĕр;

ă) купăста; в) йăранĕ.

3. Предложенири хăш сăмахĕ подлежащи пулать?

*Лена çак çăмламас кушак çурине питĕ юратать.*

а) кушак; б) Лена;

ă) кушак çурине; в) çăмламас.

III. 1. Схемăпа килĕшсе тăракан предложение тупăр.

______ – – ______ .

а) Павăл васкаса утрĕ.

ă) Хĕрача туратран такăнчĕ.

б) Хитре тутăр туянчĕ.

в) Асанне ирех вăранчĕ.

2. Схемăпа килĕшсе тăракан предложение тупăр.

______ – – – – ______ .

а) Çерçи нимĕнсĕрех юлнă.

ă) Йĕпе-сапа кĕр çитрĕ.

б) Хĕвел хĕртсе пăхать.

в) Хĕррине карта тытнă.

3. Схемăпа килĕшсе тăракан предложение тупăр.

______ – – ______ .

а) Ванюк – чăваш каччи.

ă) Вăрманта юр çирĕп-ха.

б) Хĕвел çĕре ăшăтнă.

в) Трактор тапранса кайрĕ.

IV. 1. Предложенири определенисене тупăр.

*Пысăк картана карталанса тăнăччĕ çамрăксем. (В. Алентей.)*

а) пысăк; б) пысăк, карталанса;

ă) карталанса; в) пысăк, çамрăксем.

2. Предложенири определенисене тупăр.

*Вăл çĕнĕ костюм, шап-шурă кĕпе тăхăнчĕ те урама тухрĕ. (В. Алентей.)*

а) çĕнĕ; б) çĕнĕ, шурă;

ă) шап-шурă; в) çĕнĕ, шап-шурă.

3. Предложенири определенисене тупăр.

*Çўллĕ кантăксем электричество çутипе йăлтăртатаççĕ. (В. Алентей.)*

а) çўллĕ; б) çўллĕ, электричество;

ă) электричество; в) çўллĕ, çутипе.

V. 1. Япала ятĕнчен пулнă определениллĕ сăмах майлашăвне тупăр.

а) сăвă кĕнеки; б) кивелнĕ кĕнеке;

ă) çĕнĕ кĕнеке; в) хĕрлĕ кĕнеке.

2. Япала ятĕнчен пулнă определениллĕ сăмах майлашăвне тупăр.

а) каснă вăрман; б) улпут вăрманĕ;

ă) ешерекен вăрман; в) сайра вăрман.

3. Япала ятĕнчен пулнă определениллĕ сăмах майлашăвне тупăр.

а) утмăл турат; б) симĕс турат;

ă) хуçăк турат; в) ăвăс турачĕ.

VI. 1. Предложенири обстоятельство пулакан сăмахсене тупăр.

*Çуркунне шыв çинчи пăр çуркаланма тытăннă. (В. Алентей.)*

а) çуркунне; б) шыв çинчи;

ă) çуркунне, шыв çинчи; в) çуркаланма.

2. Предложенири обстоятельство пулакан сăмахсене тупăр.

*Анлă улăхра вăл тăрслаттарса сиксе çӳренĕ. (В. Алентей.)*

а) улăхра, тăрслаттарса, сиксе; б) анлă улăхра;

ă) улăхра; в) улăхра, сиксе.

3. Предложенири обстоятельство пулакан сăмахсене тупăр.

*Паян вăл бригадăри çынсене пурне те ĕшне хĕрринчи иккĕмĕш хире янăччĕ. (В. Алентей.)*

а) паян, хĕрринчи; б) бригадăри, хире;

ă) паян, хире; в) паян, бригадăри, хире.

## Пĕр йышши членлă предложенисем

I. 1. Пĕр йышши членсем хушшине чарăну палли лартмаллине е лартмалла маррине ăнлартарăр.

*Йывăççен юлашки çулçисем сывлăшра хуллен çаврăнаççĕ те çĕре ӳкеççĕ.*

а) те союз умĕн яланах запятой лартамалла;

ă) те союз умĕн запятой лартамалла мар;

б) запятой лартмалла мар, мĕншĕн тесен те союз пĕр йышши членсем хушшинче пĕрре çеç тĕл пулать;

в) запятойне те союз хыççăн лартмалла.

2. Пĕр йышши членсем хушшине чарăну палли лартмаллине е лартмалла маррине ăнлартарăр.

*Мулкач йывăç çине улăхасшăн сике-сике пăхнă анчах кашнинчех шыва ӳкнĕ. (В. Бианки.)*

а) анчах союз хыççăн запятой лартмалла;

ă) пĕр йышши членсем хушшинче анчах союз умĕн яланах запятой лартмалла;

б) анчах союз умĕн запятой нихăçан та лартамалла мар;

в) запятой лартсан та, лартмасан та юрать.

3. Пĕр йышши членсем хушшине чарăну палли лартмаллине е лартмалла маррине ăнлартарăр.

*Тепĕр самантран вăл куккăшĕсем патĕнчен икĕ кĕленче краççын, темиçе вăрăм патак <u>тата</u> татăксемпе пралук йăтса тухрĕ.*

*(Л. Мартьянова.)*

а) пĕр йышши членсем хушшинче <u>*тата*</u> союз пулсан ун умĕн запятой лартмалла мар;

ă) пĕр йышши членсем хушшинче <u>*тата*</u> союз пулсан ун умĕн яланах запятой лартмалла;

б) <u>*тата*</u> союз хыççăн запятой лартмалла;

в) <u>*тата*</u> союз умĕн запятой нихăçан та лартамалла мар.

II. 1. Анлă пĕр йышши членсем пур предложение тупăр.

а) Ытла та хăтсăр, сивлек курăнчĕ ăна тавралăх.

ă) Вара вĕр çĕнĕ шăлавар, шап-шурă костюм тăхăнчĕ.

б) Уй-хир талккишĕпех шурă, çӳхе тĕтрелĕхпе хупланчĕ.

в) Иван хĕрĕн пĕчĕкçĕ те кӳпшек аллине хытăрах та хытăрах чăмăртарĕ.

2. Анлă пĕр йышши членсем пур предложение тупăр.

а) Килне çитрĕ те тусанлă-мĕнлĕ, йĕпе тум-тирне хывса ывăтрĕ.

ă) Çакăн пек хитре, таса кунсенче кăмăл çĕкленет.

б) Вĕсен умĕнчех астра, георгин чечекĕсем.

в) Килне çитнĕ-çитменех ĕç тумне хывса пăрахрĕ, лайăх çăвăнса тасалчĕ.

3. Анлă пĕр йышши членсем пур предложение тупăр.

а) Унăн хĕвел пек çутă, хаваслă çӳçĕ хĕр чухнехи пек вĕл-вĕл вĕçет.

ă) Хăмăр куçĕ кулса, çуталса тăрать.

б) Пĕр вăхăт Улькка та, Иван та шăпăрт пулчĕç.

в) Кунта хура вăрманти пек чăтлăхсем, урана чăлхантаракан вырăнсем тĕл пулмаççĕ.

## Текст планĕ

I. 1. Пăтраштарнă пайсенчен план тăрăх çыхăнуллă текст йĕркелĕр. Сĕннĕ плансенчен хăшĕ тĕрĕс пулнине палăртăр.

(1) Кăвакарчăнĕ çамрăкчĕ. Вăл хăй тĕллĕн вĕçме те хальтерех вĕреннĕ пуль, анчах унăн хăрах çуначĕ аманнăччĕ. Эпĕ ăна хĕрхентĕм, пăхма тытăнтăм. Аманнă çунатне эмел сĕрсе тутăрпа çыхрăм. Хайне ир те, каç та тырă сапса параттăм, шыв ĕçтереттĕм.

(2) Çу кунĕ çитнĕ çĕрелле кăвакарчăн пысăкланчĕ, тĕкĕ тикĕсленчĕ, шурăрах курăнакан пулчĕ. Эпĕ ăна усă кантăкран кăлараттăм та, кăштах вĕçсе çӳресен хăех таврăнатчĕ.

(3) Часах кăвакарчăн вăй иле пуçларĕ, алла иленчĕ, сывалчĕ. Çыхнă тутăра салтсан та унăн çуначĕ усăнса тăми пулчĕ. Хăй çапах вĕçме пултараймастчĕ-ха.

(4) Пĕррехинче эпĕ хамăр пахчара шурă кăвакарчăн тупрăм. Вăл мана ытла мĕскĕннĕн курăнчĕ: хăрăх çунатне уснă, курăк ăшĕнче хурлăхлăн лăпчăнса ларать. Мана курсанах çĕкленчĕ те тарасшăн пулчĕ. Эпĕ ăна пӳрте илсе кĕтĕм.

(Илпек Микулайĕ.)

*1) Аманнă шурă кăвакарчăна тупни.*

*2) Кăвакарчăнăн аманнă çунатне сыватни.*

*3) Кăвакарчăн сывални, алла иленни.*

*4) Çу кунĕсенче.*

а) 1, 2, 3, 4; б) 3, 4, 1, 2;

ă) 4, 1, 3, 2; в) 4, 3, 1, 2.

2. Пăтраштарнă пайсенчен план тăрăх çыхăнуллă текст йĕркелĕр. Сĕннĕ плансенчен хăшĕ тĕрĕс пулнине палăртăр.

(1) Эпир хĕрсе урпа выратпăр. Пĕшкĕнме те, пĕшкĕнсен çĕкленме те çук – пилĕк ыратать. Пуçа тĕрлĕ шухăш килсе кĕрет.

(2) Вара эпир хире, çуртри пуссине васкарăмăр. Хĕвел те тухса сарăлчĕ, хăйĕн хĕрӳ хĕлхемĕсене çĕре сапалать.

(3) Куҫ уҫӑлмасть, чӑтма ҫук ҫывӑрас килет. Анчах ним тума та ҫук – тӑмаллах. Картишӗнче лаша кӳлсе тӑратнӑ, пире кӗтет. Маюк аппа ҫыхӑ тумалли кӗлтесем йӗпетрӗ, хирте ҫиме хӑяр татса кӗчӗ.

(4) Шуралса шурӑмпуҫ хӑпарать. Хутран-ситрен автансем авӑтни илтӗнсе каять. Пӑхатӑп та – куҫ вӗҫӗнче анне тӑра парать, мана тутлӑ ыйхӑран вӑрататать.

(В. Давыдов-Анатри.)

*1) Ирхине анне вӑратни.*

*2) Хире кайма хатӗрленни.*

*3) Хире тухса кайни.*

*4) Урпа вырни.*

а) 3, 4, 2, 1; б) 4, 2, 3, 1;

ӑ) 1, 2, 3, 4; в) 4, 3, 2, 1.

3. Пӑтраштарнӑ пайсенчен план тӑрӑх ҫыхӑнуллӑ текст йӗркелӗр. Сӗннӗ плансенчен хӑшӗ тӗрӗс пулнине палӑртӑр.

(1) Йӗпе-сапа кӗр ҫитрӗ. Шартлама сивӗ, юрлӑ, тӑманлӑ хӗл ҫитрӗ. Ҫырмари юхан шыв хулӑн пӑрпа, хирсемпе ҫарансем шапшурӑ юрпа витӗнчӗҫ. Мӗнрен пулаҫҫӗ-ха пӑрпа юр?

(2) Пӑр шывра путмасть, вӑл шывран ҫӑмӑлрах. Ҫуркунне пӑр кайнӑ чухне шывра пӑр катӑкӗсем ҫиелте ишсе пыраҫҫӗ.

(3) Пӑр, кӗленче пек, витӗр курӑнать, ҫӳхе пӑрӑн тӗсӗ ҫук. Хулӑн пӑр симӗсрех е сенкертерех курӑнать.

(4) Хӗлле пӑр ҫинче конькипе ярӑнма аван. Вӑл яка. Пӑр катӑкне мӑлатукпа ҫапсан вӑл ванкланса тӗпренет.

(5) Сывлӑшра яланах шыв пӑсӗ пур. Ҫанталӑк сивӗтсен ҫав пӑсран юр пӗрчисем пулаҫҫӗ. Сивӗ ҫанталӑкра шывран пӑр пулать. (В. Ефимов.)

*1) Йӗпе-сапа кӗр хыҫҫӑнхи шартлама сивӗ хӗл.*

*2) Пӑр мӗнрен пулни.*

*3) Пӑр тӗсӗ.*

*4) Пăр шывран çăмăлрах пулни.*

*5) Пăр яка пулманни.*

| | |
|---|---|
| а) 1, 5, 3, 2, 4; | б) 1, 2, 3, 5, 4; |
| ă) 1, 3, 2, 5, 4; | в) 1, 2, 3, 4, 5. |

**Чĕнӳ сăмахĕсем**

I. 1. Панă тĕслĕхсенче чĕнӳ сăмахĕ пур предложение тупăр.

а) – Тĕрĕс, чăн-чăн фабрика, - пуçне сулчĕ Полина, - ашкакай фабрики тетпĕр ăна.

ă) – Шофер çаплах килмен-ха. Атьăр çав йывăç айне кайса ларар, - сĕнчĕ Полина.

б) Пирĕн ялта Пайми те, Паймухха та, Паймантей те, Сантепи те, Уканеш те пур.

в) Ĕнтĕ эсĕ, чакăр куçлă каччă, пире хĕвел çаврăнăш та çитертĕн, квас та ĕçтертĕн, эпир ăçтанне те ыйтса пĕлтĕн, анчах хăвăн ятна каламарăн-ха.

2. Панă тĕслĕхсенче чĕнӳ сăмахĕ пур предложение тупăр.

а) – Такмакла, такмакла, йĕкĕт! – терĕ вăййăç. – Халăха йыхăр! Пулăш пире!

ă) Эсĕ каях та каях темен пулсан курассăм та çукчĕ çак савăнăçа.

б) Çывхарса-çывхарса килчĕ тепĕр сасă: тăпăртăк! тăпăртăк! тăпăртăк!

в) – Ай, чĕлхи çакăн! – кăлтăр-кăлтăр кусрĕ Полина кулли.

3. Панă тĕслĕхсенче чĕнӳ сăмахĕ пур предложение тупăр.

а) – Пирĕн колхоз комплексĕ, - терĕ Полина, - эпĕ çакăнта ĕçлетĕп.

ă) – Эсĕ, мелник тете, ман çинчен тем ан шутла, - терĕ.

б) – Таврăнчĕ-и? Таврăнмасăр, калаттăм вĕт таврăнать тесе!

в) – Плаки мар-ха ку. Эпĕ ку, Чĕкеç аппу, - хирĕç илтĕнчĕ карчăк сасси.

## Калаçу чӗлхи. Илемлӗ чӗлхе. Официаллӑ чӗлхе

I. 1. Вуласа тухӑр. Текста мӗнле чӗлхепе çырнине палӑртӑр.

*- Эппин, Тӑрна шурӗпе мӗн тӑватпӑр? - çаплах каялла чакмарӗ Пантюхин.*

*- Кайран! Кайран! – алне сулчӗ Удейкин.*

*- Çук, апла хӑтланнипе нимӗн те пулмасть.*

*- Пулать! – пӑрӑç хӗртнӗ, вӗтеленӗ чухнехи пекех питне пӗркелентерчӗ председатель.*

*- Тӑрна шурӗнче, ман шутпа, халех ӗçе тытӑнмалла. Çак кунсенчех.*

*- Ан калаç-ха çавӑн çинчен. Çитет!*

*- Çук, çитмест.*

*(В. Алентей.)*

а) калаçу чӗлхи; б) официаллӑ чӗлхе;

ӑ) илемлӗ чӗлхе; в) публицистика чӗлхи.

2. Вуласа тухӑр. Текста мӗнле чӗлхепе çырнине палӑртӑр.

*Акӑ, кӗтмен çӗртен, хуп-хура тункатасем хыçӗнчен пылчӑклӑ-мӗнлӗ, вараланчӑк питлӗ Пантюхин килсе тухрӗ. Вӑл, пысӑк чул йӑтнӑскер, асӑрхаймарӗ, ӑна такам, мӑнтӑрскер, пырса перӗнчӗ. Иван пуçне ялт çӗклерӗ, хӑй умӗнче самай пысӑк хырӑмлӑ, кӳпшек питлӗ Удейкин тӑнине курчӗ. Вӗсем иккӗшӗ те пӗрне-пӗри куçран тинкерчӗç.*

*(В. Алентей.)*

а) калаçу чӗлхи; б) официаллӑ чӗлхе;

ӑ) илемлӗ чӗлхе; в) публицистика чӗлхи.

3. Вуласа тухӑр. Текста мӗнле чӗлхепе çырнине палӑртӑр.

*Ача аллине шӑрпӑк ан лектӗр тесе шикленет ашшӗ-амӑшӗ. Анчах та шӑпӑрлан аллине граната та лекме пултарать иккен. Муркаш районӗнчи Ятман шкулӗнче вӗренекен шкул ачисем кивӗ сарай маччинче граната тупнӑ, унпа вылямá пуçланӑ. Мотоциклпа*

*иртсе пыракан аслă класра вĕренекен каччă ачасен аллинче граната асăрхасан ăна илет те ялтан аяккарах тухса ывăтать. Сирпĕннĕ хыççăн çуртсенчи чӳрече кантăкĕсем чĕтреннĕ. Никам та сусăрланман.* *(О. Нестерова. «Хыпар» хаçатран.)*

а) калаçу чĕлхи; б) официаллă чĕлхе;

ă) илемлĕ чĕлхе; в) публицистика чĕлхи.

4. Вуласа тухăр. Текста мĕнле чĕлхепе çырнине палăртăр.

*(...) 2. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисен пурлăхпа техника никĕсне палăрмаллах çĕнетмелле, çав шута пĕрремĕш класа çӳрекен кашни ачанах хальхи йышши сĕтел-пуканпа, шкул столовăйĕсене – энерги перекетлекен пысăк технологиллĕ оборудованипе тивĕçтересси тата библиотека фондне вырăсла-чăвашла илемлĕ тата информаци-справка литературисемпе самаях çĕнетесси те кĕрет.* *(«Хыпар» хаçатран.)*

а) калаçу чĕлхи; б) официаллă чĕлхе;

ă) илемлĕ чĕлхе; в) публицистика чĕлхи.

## Хутлă предложени. Союзсăр хутлă тата союзлă хутлă предложенисем

I. 1. Панă тĕслĕхсенче хутлă предложени тупăр.

а) Çынсене сăнать вăл, хаксемпе кăсăкланать.

ă) Юсаса тăманнипе шоссе самаях япăхнă, унта та кунта асфальт татăкĕсем хăпăнса тухнă.

б) Петров хăй «Жигулине» «Москвича» хирĕç лартрĕ, сăнама пуçларĕ.

в) Вăрă лавккана кĕрсе кайрĕ, тепĕр вунă минутранах пысăк çыхă йăтса тухрĕ, ăна машини ăшне пăрахрĕ.

2. Панă тĕслĕхсенче хутлă предложени тупăр.

а) Унтан багажникран чылай пысăк сумка туртса кăларчĕ, çăкăр лавккине кĕрсе çухалчĕ.

ă) Семен Ильич машинăн тĕкĕрĕ çине пăхрĕ те хыçра кăвак «Жигулие» асăрхарĕ.

б) Кăкăр умĕнчи пĕчĕк кĕсьерен водитель правине кăларчĕ, унпа пĕрле виçĕ е пилĕк тенкĕлĕх укçасем сиксе тухрĕç.

в) Пĕр лавккара вунă çăкăр туянчĕ вăл, унтан теприн патне кăлтăртатрĕ.

3. Панă тĕслĕхсенче хутлă предложени тупăр.

а) Пĕрре тревогăпа çĕклерĕç те, ыйхă тĕлĕшпе сан çинех сикнĕччĕ эпĕ.

ă) Тăвайне тухса каякан урамра, пилĕк хутлă пысăк çуртра, виççĕмĕш хутра пурăнать иккен.

б) Кительне хывса çакрĕ майор, кĕпе вĕççĕн тăрса юлчĕ.

в) Пўртсем, хуралтăсем, хапха çине ўкнĕ сывлăм тахçанах типнĕ.

II. 1. Текста вуласа тухăр.

*(1)Тухсанах кăн-кăвак пысăк самосвал курчĕ вăл, хыçне çинçе трос кăкарнă. (2)Турăçăм, хăйсен хĕп-хĕрлĕ «Москвичĕ» самосвал хыçĕнче ларать-çке. (3)Малти пайĕ йăлтах арканнă ун, çиелти хуппи те сулланса çеç тăрать. (4)Ак инкек... (5)Юрать-ха Çеменĕ сывă. (6)Вăл, авă, машинăран тухса пĕшкĕнчĕ, кăкарнă тросне вĕçертрĕ.*

*(А. Емельянов.)*

1) Текстри хутлă предложенисене тупăр.

а) 2; ă) 1, 6; б) 1, 3; в) 3, 6.

2) Хутлă предложенисен пайĕсем мĕнпе çыхăннине палăртăр.

а) интонаципе; б) интонаципе; союзпа;

ă) союзпа; в) аффикспа; интонаципе.

2. Текста вуласа тухăр.

*(1)Пĕве хыçне ашшĕ вăрçăченех икĕ рет йăмра лартса тухнăччĕ. (2)Халь вĕсем ватăлса кайнă, дамбăран курăнакан турачĕсем те пўрт пуралама юрăхлă. (3)Йăмрасен айне*

*иртĕхмеллех ÿссе кайнă вĕлтĕренпе куршанак сырса илнĕ. (4)Пĕве пуçне хăва тĕмисем хÿтĕлеççĕ. (5)Хÿтĕлеме хÿтĕлеççĕ те, çапах хумсем çырана ишĕлтересшĕн. (А. Емельянов.)*

1) Текстри хутлă предложенисене тупăр.

а) 2, 3; ă) 3, 4; б) 3, 5; в) 2, 5.

2) Хутлă предложенисен пайĕсем мĕнпе çыхăннине палăртăр.

а) интонаципе; б) интонаципе; союзпа;

ă) союзпа; в) союзпа; аффикспа.

3. Текста вуласа тухăр.

*(1)Алăк уçăлчĕ те, пÿрте сивĕ сывлăш шурă путек кĕтĕвĕ пек капланса тулчĕ, урай тăрăх саланса кайрĕ. (2)Кĕске кĕрĕк тăхăннă Кĕçтук пĕр çĕклем вутă çĕклесе кĕчĕ, хăна çиннелле пăхса çĕклеме кăмака умне хуллен хучĕ.*

*(3) – Уçăлмалла тухса кăштах вутă çуртăм, - терĕ вăл. (4)Унăн пичĕ юн пĕрĕхес пек хĕрелнĕ. (А. Артемьев.)*

1) Текстри хутлă предложенисене тупăр.

а) 1, 2; ă) 2, 3; б) 3; в) 1, 4

2) Хутлă предложенисен пайĕсем мĕнле çыхăннине палăртăр.

а) интонаципе; б) интонаципе; союзпа;

ă) союзпа, хыç сăмахпа; в) союзпа; аффикспа.

## Тÿрĕ пуплевлĕ предложенисем

I. 1. Предложенин тĕрĕс схемине палăртăр.

*Тая урайне анчĕ: «Мĕн тумалла-ха?» (П. Можаев.)*

а) «Т[ ]?» - а. б) А [ ] : «т [ ]?»

ă) А [ ] : «Т [ ] ?» в) А [ ] : «Т [ ] ?»

2. Предложенин тĕрĕс схемине палăртăр.

«*Çунса ÿкекен йывăççем айне кăна лекес марччĕ», - вĕçсе иртрĕ шухăш Ира пуçĕнче. (В. Тимаков.)*

а) «Т[ ]», - а [ ] . б) А [ ] : «т [ ] ».

ă) А [ ] : «Т [ ] ». в) «Т [ ].» - А [ ].

3. Предложенин тĕрĕс схемине палăртăр.

*«Суятăн, юман хăвăлĕнче мĕнле çĕлен пултăр?» - тетĕп.*

а) «Т□», - а □.　　б) «Т□?» - а □.

ă) «т□?» -а □.　　в) «Т□?» - А □.

II. 1. Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисене тĕрĕс вĕçлĕр.

*- Мĕн тăватăр çак эсир? - ... (В. Енĕш.)*

а) чĕнчĕ ачисене амăшĕ.

ă) ыйтрĕ ачисенчен амăшĕ, çакна асăрханăскер.

б) хистерĕ ачисене амăшĕ, çакна асăрханăскер.

в) кларĕ ачисене амăшĕ.

2. Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисене тĕрĕс вĕçлĕр.

*- Ан йĕр, пĕчĕк хĕр, аçу таврăнатех, - ...* *(В. Эльби.)*

а) йăпатать ăна умне пырса тăнă хĕрарăм.

ă) кăшкăрса ячĕ вăл.

б) хĕтĕртсе кларĕ мăнтăр хĕрарăм.

в) ыйтрĕ ачаран асли.

3. Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисене тĕрĕс вĕçлĕр.

*- Кам патне хăварсшăн эсĕ ăна? - ...* *(В. Эльби.)*

а) малалла тăсрĕ вăл сăмахне.

ă) кăшкăрашрĕ çиллес хĕрарăм.

б) юлташне хăлхинчен пăшăлтатса кларĕ.

в) кăсăкланчĕ аслă хĕрĕ.

## 2.2. ФОНЕТИКА. ГРАФИКА. ОРФОГРАФИ

### Алфавит

I. 1. Чăваш алфавитĕнче пурĕ миçе сас палли?

а) 36; ă) 33; б) 37; в) 38.

2. Чăваш алфавитĕнче пурĕ миçе уçă сас палли?

а) 13; ă) 24; б) 22; в) 7.

3. Чăваш алфавитĕнче пурĕ миçе хупă сас палли?

а) 24; ă) 22; б) 21; в) 23.

4. Хăш сас паллисем сасăсене пĕлтермеççĕ?

а) ь, ы; ă) ь, ъ; б) ы, ъ; в) ъ.

5. Хăш сас паллисем икĕ сасса пĕлтереççĕ?

а) е, ё, ĕ, ю; б) е, ё, ю, я;

ă) ё, ĕ, ю, я; в) е, э, ю, я.

II. 1. Панă сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарнă тĕрĕс хурава тупăр.

(1) анне; (2) анчăк; (3) автан; (4) авăр; (5) ампар; (6) ака.

а) 1, 2, 3, 4, 5, 6; б) 3, 4, 6, 5, 2, 1;

ă) 4, 3, 6, 5, 1, 2; в) 4, 3, 6, 5, 2, 1.

2. Панă сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарнă тĕрĕс хурава тупăр.

(1) саккăр; (2) сĕрĕм; (3) сĕреке; (4) сăмах; (5) сак; (6) сурăх.

а) 5, 1, 4, 3, 2, 6; б) 1, 5, 2, 3, 4, 6;

ă) 5, 1, 3, 2, 4, 6; в) 5, 1, 2, 3, 4, 6.

3. Панă сăмахсене алфавит йĕркипе вырнаçтарнă тĕрĕс хурава тупăр.

(1) мăрье; (2) мăк; (3) мĕн; (4) мухтав; (5) мăнтăр; (6) мăка.

а) 2, 6, 5, 1, 4, 3; б) 2, 6, 5, 1, 3, 4;

ă) 3, 2, 6, 5, 1, 4; в) 2, 6, 5, 3, 4, 1.

III. 1. Панă сăмахра миçе сасă, миçе сас палли пулнине палăртăр.

*мăрье*

а) 5 сасă, 5 сас палли; б) 6 сасă, 5 сас палли;

ă) 4 сасă, 5 сас палли; в) 5 сасă, 4 сас палли.

2. Панă сăмахра миçе сасă, миçе сас палли пулнине палăртăр.

*тĕттĕм*

а) 6 сасă, 6 сас палли; б) 6 сасă, 5 сас палли;

ă) 5 сасă, 6 сас палли; в) 5 сасă, 3 сас палли.

3. Панă сăмахра миçе сасă, миçе сас палли пулнине палăртăр.

*тĕтре*

а) 5 сасă, 5 сас палли; б) 6 сасă, 5 сас палли;

ă) 5 сасă, 4 сас палли; в) 4 сасă, 4 сас палли.

## Уçă сасăсем, вĕсен мăшăрлăхĕ

I. 1. Чăваш литература чĕлхинче пурĕ миçе хытă уçă сасă?

а) 3; ă) 4; б) 5; в) 6.

2. Чăваш литература чĕлхинче пурĕ миçе çемçе уçă сасă?

а) 3; ă) 4; б) 5; в) 6.

3. Сасăсен мăшăрĕсене тĕрĕс палăртман хурава тупăр.

а) ă - ĕ; ă) у - ÿ; б) а – о; в) ы – и.

II. 1. Сăмахри уçă сасăсене палăртăр.

*вылянчăк*

а) ы, я, ă; б) ы, а, ă;

ă) ы, я, а; в) я, а, ă.

2. Сăмахри уçă сасăсене палăртăр.

*юман*

а) ю, а; ă) ю, ă; б) у, а; в) у, ă.

3. Сăмахри уçă сасăсене палăртăр.

*юлашки*

а) ю, а, и; б) ю, а;

ă) у, а, и; в) у, а, ы.

III. 1. Сăмахри хупă сасăсене палăртăр.

*вĕçтер*

а) [ в`, ç, т`, р`]; б) [ в, ç, д`, р];

ă) [ в`, с, т, р]; в) [ в, ç, т].

2. Сăмахри хупă сасăсене палăртăр.

*пĕлтерĕш*

а) [ б`, л, д`, р, ш]; б) [ п`, л`, д`, р`, ш`];

ă) [ б`, л, т`, р, ш]; в) [ п, л, т, р, ш].

3. Сăмахри хупă сасăсене палăртăр.

*çанталăк*

а) [ ç`, н, т, л`, к]; б) [ ç, н, д, л, к];

ă) [ ç, н, т, к]; в) [ ç, н, т, л, к].

### Уçă сасăсен килĕшĕвĕ

I. 1. Хăш сăмахсенче уçă сасăсем пурте хытă?

а) çунат, курак, вĕçет; б) кĕреçе, кĕрепле, витре;

ă) асанне, асатте, шăллăм; в) турат, çăка, йывăç.

2. Хăш сăмахсенче уçă сасăсем пурте çемçе?

а) анне, хĕр, кукамай; б) тилĕ, шăши, упа;

ă) тете, кĕрӳ, кин; в) путене, тăри, упа.

3. Хăш сăмахсенче пуринче те хытă тата çемçе уçă сасăсем пур?

а) тăри, курак, путене; б) ывăл, хĕр, ача;

ă) атте, анне, мучи; в) вăрман, улăх, пуш хир.

II. Текста вуласа тухăр, ĕçсене пурнăçлăр.

*Юхать, куçать çурхи Атăл! Хăватлăн малалла вирхĕнет, пуласлăха васкать.*

*Герман Марков вичкĕн куçĕпе юхан шыв çине пăхать, унăн кашни юхăмне е сулăмне тупма тăрăшать. Сивĕ çилтен хӳтĕленсе*

*пальто çухине çĕклет те каллех юхан шыва тĕпчет, пăр катăкĕсене сăнать.* (*И. Вутлан.*)

1. Текстри 5 хытă сăмаха палăртăр.

а) юхать, хăватлăн, пуласлăх, юхăм, çил;

ă) хăватлăн, малалла, юхăм, сулăм, пăр;

б) куçать, каялла,васкать, юхать, пальто;

в) çурхи, вичкĕн, сивĕ, кашни, пальто.

2. Текстри 5 çемçе сăмаха палăртăр.

а) çурхи, вичкĕн, Атăл, сулăм, каллех;

ă) çуха, хӳтĕленсе, çил, кашни, пăр;

б) сивĕ, хӳтĕленсе, тĕпчет, çĕклет, вирхĕнет;

в) çĕклет, тĕпчет, сивĕ, çурхи, çил.

3. Текстри 5 хутăш сăмаха палăртăр.

а) вирхĕнет, каллех, шыв, сăнать, пăр;

ă) çурхи, Герман, пальто, туп, куç;

б) пуласлăх, куçать, кашни, çĕклет, перет;

в) çурхи, каллех, катăкĕ, пурте, кашни.

III. 1. Панă сăмах çумне мĕнле аффикс хушăнма пултараймасть?

*тăван*

а) –па; ă) –тан; б) –лĕх; в) –а.

2. Панă сăмах çумне мĕнле аффикс хушăнма пултараймасть?

*улăх*

а) –ра; ă) –шĕн; б) –а; в) –ран.

3. Панă сăмах çумне мĕнле аффикс хушăнма пултараймасть?

*чечек*

а) –ре; ă) –пе; б) –шăн; в) –е.

IV. 1. Хăш сăмахсенче пуринче те Ь çырмалла?

а) юрат..., мăкăн..., шал...ча;

ă) кал...ча, мун...ча, пыл...чăк;

б) мăкăл..., выл...ăх, ахал...;

в) кукăл..., çунат..., пăн...чă.

2. Хăш сăмахсенче пуринче те Ь çырмалла?

а) йĕкел..., килет..., йĕпен...;

ă) вĕлтрен..., йĕвен..., кил...;

б) вĕрен..., лĕплен..., йĕл...ме;

в) кукăл..., тух...я, çем...е.

3. Хăш сăмахсенче пуринче те Ь çырмалла?

а) шукăл..., кукăл..., мăкăн...;

ă) нӳрел..., шиплет..., чĕл...хе;

б) чĕн...тер, мĕскĕн..., эмел...;

в) мĕл...ке, шĕвĕр..., чĕвĕт...тет.

### Вырăс чĕлхичен йышăннă сăмахсем

I. 1. Тĕслĕхсем хушшинче вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене тĕрĕс палăртăр.

*Укăлча, учитель, сасă, сăмах, предложени, çерем, вĕренекен, дежурнăй.*

а) укăлча, учитель, çерем;

ă) учитель, сасă, сăмах;

б) учитель, предложени, дежурнăй;

в) сăмах, предложени, вĕренекен.

2. Тĕслĕхсем хушшинче вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене тĕрĕс палăртăр.

*Ручка, кăвак, хура, отметка, хĕрлĕ, отличник, пиллĕк.*

а) ручка, хĕрлĕ, отметка;

ă) хĕрлĕ, пиллĕк, отличник;

б) ручка, хура, кăвак;

в) ручка, отметка, отличник.

3. Тĕслĕхсем хушшинче вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсене тĕрĕс палăртăр.

*Музей, кӳлĕ, залив, акăш, чĕкеç, театр, шыв.*

а) музей, залив, театр;

ă) кӳлĕ, акăш, чĕкеç;

б) музей, акăш, чĕкеç;

в) залив, театр, шыв.

II. 1. Вуласа тухăр. Текстри вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене тĕрĕс тупса палăртăр.

*Пӳлĕмĕ пысăк та чаплă мэрăн. Çӳллĕ мачча айĕнче ылтăнпа эрешленĕ люстра çакăнса тăрать, урайне паха кавирпе витнĕ. Вăрăм сĕтел тавра çемçе пукансем, стена çинче Ильич портречĕ çакăнса тăнă вырăн пушшăн курăнать.* (И. Вутлан.)

а) пӳлĕм, мачча, люстра, кавир;

ă) мэр, люстра, кавир, портрет;

б) люстра, кавир, портрет, диван;

в) ылтăн, кавир, портрет, вырăн.

2. Вуласа тухăр. Текстри вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене тĕрĕс тупса палăртăр.

*Смена пĕтнĕ хыççăн та килне часах тухса каймарĕ вăл. Палатăсене çӳп хăварман-ши тесе тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕ, хура алшăллисене тасисемпе улăштарчĕ. Вак-тĕвек ĕçсене тукаласа ултă сехет иртнине те сисмерĕ.* (Улькка Эльмен.)

а) кил, çӳп, вак-тĕвек;

ă) хыççăн, алшăлли, ултă;

б) смена, палата, сехет;

в) палата, сехет, кил.

3. Вуласа тухăр. Текстри вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене тĕрĕс тупса палăртăр.

*Миша ĕç пĕтерсен машинине гаража лартрĕ те çăвăнмалли пӳлĕме утрĕ. Вăл Кивкас ялĕпе юнашар вырнаçнă Çĕньял ялĕнчен. Кăçал çеç çар службинчен таврăнчĕ пулин те колхоз председателĕ ăна çĕнĕ машина шанса пачĕ.* (Улькка Эльмен.)

а) ĕç, пӳлĕм, ял, çар;

ă) гараж, Кивкас, çар, служба;

б) машина, Çĕньял, колхоз, çар;

в) машина, гараж, служба, председатель.

## Хупă сасăсем

I. 1. Хытă хупă сасăллă сăмахсен ушкăнне палăртăр.

а) шăрпăк, кăкшăм, кашăк;

ă) витре, михĕ, йĕп;

б) пукан, çӳлĕк, витре;

в) курак, тăрна, хĕрен.

2. Çемçе хупă сасăллă сăмахсен ушкăнне палăртăр.

а) çиçĕм, çумăр, кĕтӳ;

ă) путек, сурăх, така;

б) хĕвел, тĕкĕр, ӳхĕ;

в) тĕкĕр, çĕлен, çыхă.

3. Хăш падежсенче *тетрадь, мăкăнь* йышши сăмахсенче Ь çырмаççĕ?

а) тĕп тата камăнлăх падежĕсенче;

ă) вырăн тата пару падежĕсенче;

б) пĕрлелĕх тата туху падежĕсенче;

в) камăнлăх тата пару падежĕсенче.

4. Хăш сăмахсенче Ы саспалли çырмалла?

а) ч...кĕ, ç...лĕм;

б) ç...н, ч...тлĕх;

ă) ч...лай, ç...ру;

в) ч...с, ç...л.

5. Хăш сăмахсенче И сас палли çырмалла?

а) ч...р, ç...р;

б) ч...ркӳ, ç...лĕ;

ă) ç...рĕп, ч...шкă;

в) ч...хăн, ç...çĕм.

## Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенчи хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ

I. 1. Панă сăмах çумне тĕрĕс аффикс хушăр.

*старик*

а) -ён;  ă) –ăн;  б) –е;  в) –ре.

2. Панă сăмах çумне тĕрĕс аффикс хушăр.

*ноябрь*

а) -ăн;  ă) –те;  б) –тан;  в) –шăн.

3. Панă сăмах çумне тĕрĕс аффикс хушăр.

*музей*

а) -ре;  ă) -рен;  б) –ăн;  в) –е.

## Хупă сасăсем вăраммăн илтĕнни, ăна çыруру палăртасси

I. 1. Хăш сăмахсенче икĕ Л çырмалла?

а) чап...ă, ача...ă, тăван...а;

ă) лаша...ă, хĕве...ĕ, укçа...ă;

б) ача...а, чăваш...а, телей...ĕ;

в) çу...ă, çутă...а, çăм...ă.

2. Хăш сăмахсенче икĕ Л çырмалла?

а) çемье...ĕ, кĕрнек...ĕ, мухтав...ă;

ă) пăхăну...ă, вăлта...ă, ача...ă;

б) кайма...а, мотор...ă, кил...ĕ;

в) кулă...ă, шăмă...ă, тĕтĕм...ĕ.

3. Хăш сăмахсенче икĕ Л çырмалла?

а) пукане...е, лаша...а, вăрçă...а;

ă) кăмăл...ă, туйăм...ă, кутăн...а;

б) телей...ĕ, хĕр...ĕ, тус...ă;

в) тупăш...ă, тете...ĕ, тĕтĕм...ĕ.

II. 1. Вуласа тухăр. Текстра вăрăм хупă сасăллă сăмахсем пурĕ миçе?

*Юратать Тимошев çак сукмакпа хулана таврăнма. Çывăхрах тарăн мар çырма. Ун тĕпĕпе сивĕ çăлкуçсенчен тапса тухакан шыв шăнкăртатса юхать. Çырма хĕрринче те пĕрре çеç мар ларнă Тимошев. Унта чĕрĕ курăк шăрши сăмсана кăтăклать. Çырма*

*айккипе ӳсекен шурӑ, кӑвак, сарӑ, чӑпар чечексем куҫа илӗртеҫҫӗ. Хитре лӗпӗшсем ҫуначӗсене лепӗшлеттерсе вӗҫеҫҫӗ, пыл хурчӗсем сӗрлетеҫҫӗ. Ҫырма тӗпӗ тӑршшӗпех хупахланнӑ, вӗсен айӗнчен шапасем кваклатни те илтӗнкелет-ха.* *(Г. Краснов.)*

а) 10; ӑ) 8; б) 9; в) 11.

2. Вуласа тухӑр. Текстра вӑрӑм хупӑ сасӑллӑ сӑмахсем пурӗ миҫе?

*Тӳпе янкӑр сенкер. Хӗвел тухсанах пӗҫертме тытӑнать. Вӑл тӳпенелле хӑпарса ҫитме пуҫласан курӑксем лӗчӗртетсе пуҫне усаҫҫӗ. Кӑнтӑрласем иртсен кашни кунах вӗри ҫил ҫӗкленет те ҫӗр ҫийӗпе ҫаврӑнса ҫӳрет. Урамра ӳсекен чӗп курӑкӗ тахҫанах типсе ларчӗ. Ҫур тыррисем имшер тунисемпе ӳсме чарӑнса хытса ларчӗҫ. Хырла чӑх утса каҫмалла ӑшӑхланса юлчӗ.*

*(Н. Петровская.)*

а) 5; ӑ) 4; б) 6; в) 7.

3. Вуласа тухӑр. Текстра вӑрӑм хупӑ сасӑллӑ сӑмахсем пурӗ миҫе?

*Ял халӑхӗ ӗҫлерӗ. Ыраш вырса пӗтерсе капана хыврӗҫ. Молотилка сасси таврара вӑн! вӑ-ӑн! туса илтӗнме пуҫларӗ. Клавӑн хӗрӳ ӗҫ пуҫланчӗ. Вӑл кунӗн-ҫӗрӗн тенӗ пек патшалӑха тырӑ турттарчӗ. Паян та кивӗ йӗтем ҫинчи ыраша колхоз кӗлечӗсем патне турттарса пӗтернӗ ҫӗре каҫ енне кайнӑччӗ ӗнтӗ. Юлашки ыраша михӗсене тултасан халран кайнӑ хӗрсем сивӗ шыв ӗҫрӗҫ те, машина станци еннелле ҫул тытрӗ.* *(Н. Петровская.)*

а) 8; ӑ) 7; б) 5; в) 6.

III. 1. –Лӑ(-лӗ), -ла(-ле) аффиксем хушӑнса пулнӑ вӑрӑм хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене тӗрӗс палӑртӑр.

а) кӑмӑллӑ, кӗрнеклӗ, сӑпайлӑ;

ӑ) куккукла, путенелле, шӑпчӑкла;

б) сӑрӑллӑ, сӳреллӗ, вӑрҫӑлла;

в) хӗвеллӗ, ҫиллӗ, ӑшала.

2. –Лӑ(-лӗ), -ла(-ле) аффиксем хушӑнса пулнӑ вӑрӑм хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене тӗрӗс палӑртӑр.

а) кӗмӗллӗ, сукмаклӑ, лашаллӑ;

ӑ) пуканеллӗ, сивӗлле, ыйхӑллӑ;

б) пуканлӑ, сӗтеллӗ, тӗпеллӗ;

в) тутарла, ҫармӑсла, вырӑсла.

3. –Лӑ(-лӗ), -ла(-ле) аффиксем хушӑнса пулнӑ вӑрӑм хупӑ сасӑллӑ сӑмахсене тӗрӗс палӑртӑр.

а) тӗпле, кӑмӑлла, сулӑллӑ;

ӑ) тӳпеллӗ, хӗвеллӗ, сивле;

б) автанла, кайӑкла, ҫумӑрла;

в) лашаллӑ, такаллӑ, ӗнеллӗ.

## Ялан янравлӑ хупӑ сасӑсем

I. 1. Чӑваш литература чӗлхинче пурӗ миҫе ялан янравлӑ сас палли?

а) 6; ӑ) 5; б) 7; в) 8.

2. [в] сасӑллӑ сӑмахсене тӗрӗс палӑртӑр.

а) Ванюк, савни, шыв; б) актив, ялав, хӑвӑл;

ӑ) Иванов, ҫава, плов; в) йывӑҫ, плов, хӑвӑл.

II. 1. Панӑ предложенире пурӗ миҫе ялан янравлӑ хупӑ сасӑллӑ сӑмах?

*Паллашма пӗр кун та ҫителӗклӗ, туслашма вара пин кун кирлӗ.* *(Г. Краснов.)*

а) 7; ӑ) 10; б) 8; в) 9.

2. Панӑ предложенире пурӗ миҫе ялан янравлӑ хупӑ сасӑллӑ сӑмах?

*Шалта ҫав хушӑра ҫынсем питӗ хӗрсе калаҫрӗҫ.*

*(Г. Краснов.)*

а) 5;  ӑ) 6;  б) 7;  в) 4.

3. Панӑ предложенире пурӗ миҫе ялан янравлӑ хупӑ сасӑллӑ сӑмах?

*Наҫтук часах Хупах варне кӑмӑлсӑрланса таврӑнчӗ.*

*(Г. Краснов.)*

а) 3;  ӑ) 5;  б) 4;  в) 6.

III. 1. Панӑ сӑмахра пурӗ миҫе ялан янравлӑ хупӑ сасӑ?

*кӑмӑллӑн*

а) 1;  ӑ) 2;  б) 3;  в) 4.

2. Панӑ сӑмахра пурӗ миҫе ялан янравлӑ хупӑ сасӑ?

*уйрӑласпа*

а) 1;  ӑ) 3;  б) 4;  в) 5.

3. Панӑ сӑмахра пурӗ миҫе ялан янравлӑ хупӑ сасӑ?

*ҫӑмӑлттай*

а) 3;  ӑ) 2;  б) 1;  в) 4.

## *К, п, с, ҫ, т, х, ч, ш* хупӑ сасӑсем

I. 1. Вуласа тухӑр. Хӑш падеж форминче паллӑ тунӑ хупӑ сасӑ янӑраса илтӗннине калӑр.

*Тантӑш, тантӑшӑн, тантӑшра, тантӑшсӑр.*

а) тӗп падежра;  б) пару падежӗнче;

ӑ) камӑнлӑх падежӗнче;  в) вырӑн падежӗнче.

2. Вуласа тухӑр. Хӑш падеж форминче паллӑ тунӑ хупӑ сасӑ янӑраса илтӗннине калӑр.

*Тус, тусшӑн, туспа, туса.*

а) тӗп падежра;  б) пару падежӗнче;

ӑ) камӑнлӑх падежӗнче;  в) пирке падежӗнче.

3. Вуласа тухӑр. Хӑш падеж форминче паллӑ тунӑ хупӑ сасӑ янӑраса илтӗннине калӑр.

*Кайӑк, кайӑка, кайӑкра, кайӑксӑр.*

а) тӗп падежра;  б) камӑнлӑх падежӗнче;

ӑ) пару падежĕнче; в) çуклӑх падежĕнче.

II. 1. Предложенири сӑмахсенче хӑш хупӑ сасӑсем янӑраса илтĕнеççĕ?

*Сӑлтавĕ тупӑнчĕ.*

а) с, т, ч; б) л, в, н;

ӑ) с, т, п; в) т, п, ч.

2. Предложенири сӑмахсенче хӑш хупӑ сасӑсем янӑраса илтĕнеççĕ?

*Савӑнтӑм вара куншӑн.*

а) в, н; ӑ) с, т; б) м, р; в) т, ш.

3. Предложенири сӑмахсенче хӑш хупӑ сасӑсем янӑраса илтĕнеççĕ?

*Шӑналӑк чаршава пĕр кĕтесĕнчен сирсе пӑхрӑм.*

а) ш, н, л, в; б) ш, т, с, р, х;

ӑ) ш, т, с, ч, с; в) ш, р, т, с, ч, с.

## Вырӑс чĕлхинчен йышӑннӑ сӑмахсенче *б, г, д, ж, з* сас паллисене çырасси

I. 1. [п] сасӑллӑ сӑмаха тĕрĕс тупса палӑртӑр.

а) банка; ӑ) общежити; б) герб; в) банк.

2. [к] сасӑллӑ сӑмаха тĕрĕс тупса палӑртӑр.

а) газ; ӑ) гараж; б) герб; в) диалог.

3. [т] сасӑллӑ сӑмаха тĕрĕс тупса палӑртӑр.

а) орден; ӑ) шоколад; б) диалог; в) диван.

4. [ш] сасӑллӑ сӑмаха тĕрĕс тупса палӑртӑр.

а) жираф; ӑ) гараж; б) этажерка; в) журнал.

5. [с] сасӑллӑ сӑмаха тĕрĕс тупса палӑртӑр.

а) приз; ӑ) звено; б) зоопарк; в) музей.

II. 1. Хӑш сӑмахĕ ытлашши?

а) çурт; ӑ) фабрика; б) завод; в) библиотека.

2. Хăш сăмахĕ ытлашши?

а) автобус; ă) поезд; б) троллейбус; в) лав.

3. Хăш сăмахĕ ытлашши?

а) монолог; ă) диалог; б) калаçу; в) полилог.

### Ударени (пусăм)

I. 1. Пусăм 1-мĕш сыпăк çине ӳкекен сăмахсен ушкăнне тĕрĕс палăртăр.

а) лаша, ĕне, сурăх; б) пĕлĕт, тӳпе, хĕвел;

ă) çеçпĕл, лантăш, мăкăнь; в) çӳçе, йăмра, хурăн.

2. Пусăм юлашки сыпăк çине ӳкекен сăмахсен ушкăнне тĕрĕс палăртăр.

а) ешĕл, кăвак, сенкер; б) кӳлĕ, çырма, вăрман;

ă) калча, шалча, йывăç; в) юман, пилеш, хурама.

3. Пусăм 2-мĕш сыпăк çине ӳкекен сăмахсен ушкăнне тĕрĕс палăртăр.

а) юманлăх, йăмралăх, патшалăх;

ă) чăрăшлăх, хурăнлăх, хурамалăх;

б) паттăрлăх, сăпайлăх, каннăçлăх;

в) пĕлтерӳ, ăнлантару, тупăшу.

II. 1. Сăмахри ударени хăш сыпăк çине ӳкнине тĕрĕс палăртăр.

*фотографире*

а) 1-мĕш сыпăк çине; б) 3-мĕш сыпăк çине;

ă) 2-мĕш сыпăк çине; в) 5-мĕш сыпăк çине.

2. Сăмахри ударени хăш сыпăк çине ӳкнине тĕрĕс палăртăр.

*магнитофонпа*

а) 1-мĕш сыпăк çине; б) 3-мĕш сыпăк çине;

ă) 2-мĕш сыпăк çине; в) 5-мĕш сыпăк çине.

3. Сăмахри ударени хăш сыпăк çине ӳкнине тĕрĕс палăртăр.

*телевизорпа*

а) 1-мĕш сыпăк çине; б) 3-мĕш сыпăк çине;

ă) 2-мĕш сыпăк çине; в) 5-мĕш сыпăк çине.

## Сӑмахри *ӑ, ӗ* сасӑсем тухса ӳкме пултарни

I. 1. Панӑ тӗслӗхсенче кӗске формӑра ҫырнӑ сӑмаха тупса палӑртӑр.

а) пултӑран; б) ҫывхар;

ӑ) шултӑра; в) тавӑрӑн.

2. Панӑ тӗслӗхсенче кӗске формӑра ҫырнӑ сӑмаха тупса палӑртӑр.

а) вӗлтрен; б) сӑвӑҫӑ;

ӑ) сахалӑшӗ; в) тӑватӑ.

3. Панӑ тӗслӗхсенче кӗске формӑра ҫырнӑ сӑмаха тупса палӑртӑр.

а) уйӑх; б) икерч;

ӑ) ҫуркунне; в) сӑхӑ.

II. 1. Панӑ тӗслӗхсенче тулли формӑра ҫырнӑ сӑмаха тупса палӑртӑр.

а) сас; б) кантра;

ӑ) чӗпӗ; в) нихҫан.

2. Панӑ тӗслӗхсенче тулли формӑра ҫырнӑ сӑмаха тупса палӑртӑр.

а) сакӑрвуннӑ; б) сив;

ӑ) кӗтӳҫ; в) нӳр.

3. Панӑ тӗслӗхсенче тулли формӑра ҫырнӑ сӑмаха тупса палӑртӑр.

а) курнӑҫ; б) йыт;

ӑ) йӳҫ; в) сывӑ.

## 2.3. ЛЕКСИКА

### Мĕн вăл лексика? Сăмах пĕлтерĕшĕ

I. 1. Панă предложенире пĕрреллĕ хисепри туху падежĕнчи япала ятне тĕрĕс тупса палăртăр.

*Шкултан вĕренсе тухсан пĕр харăс икĕ çĕре заявлени патăм.*

*(В. Эльби.)*

а) шкултан;
б) заявлени;
ă) çĕре;
в) патăм.

2. Панă предложенири пĕрре иртнĕ вăхăтри, 1-мĕш сăпатри, пĕрреллĕ хисепри глагола тĕрĕс тупса палăртăр.

*Мала иртрĕ те тӳрех уничере ларакан пӳрт патнелле утрĕ.*

*(В. Эльби.)*

а) иртрĕ;
б) иккĕшĕ те тĕрĕс;
ă) утрĕ;
в) пĕри те тĕрĕс мар.

3. Панă предложенири пĕрре иртнĕ вăхăтри, 1-мĕш сăпатри, пĕрреллĕ хисепри глагола тĕрĕс тупса палăртăр.

*Киле çитсе курас-ха текелесе Елюк ура çине тăчĕ.*

*(Н. Петровская.)*

а) киле;
б) курас-ха;
ă) çитсе;
в) тăчĕ.

### Пĕр пĕлтерĕшлĕ тата нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем

I. 1. Словарьпе усă курса пĕр пĕлтерĕшлĕ çеç пулакан сăмаха тĕрĕс тупса палăртăр.

а) сĕреке;
б) сĕт;
ă) сĕрĕм;
в) сивĕ.

2. Словарьпе усă курса пĕр пĕлтерĕшлĕ çеç пулакан сăмаха тĕрĕс тупса палăртăр.

а) аш;
б) ашăк;
ă) ашак;
в) ашкăн.

3. Словарьпе усă курса пĕр пĕлтерĕшлĕ çеç пулакан сăмаха тĕрĕс тупса палăртăр.

а) йăх; б) йĕвен;

ă) йăш; в) йĕкĕлте.

II. 1. Словарьпе усă курса нумай пĕлтерĕшлĕ сăмаха тĕрĕс тупса палăртăр.

а) кӳренчĕк; б) кӳренӳ;

ă) лупашка; в) кушак.

2. Словарьпе усă курса нумай пĕлтерĕшлĕ сăмаха тĕрĕс тупса палăртăр.

а) çăтмах; б) çăхав;

ă) çемье; в) тăшман.

3. Словарьпе усă курса нумай пĕлтерĕшлĕ сăмаха тĕрĕс тупса палăртăр.

а) çерем; б) çенĕк;

ă) тăхтав; в) тăхлан.

## Сăмахсен тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсем

I. 1. Панă сăмах майлашăвĕсенчен тӳрĕ пĕлтерĕшлине тĕрĕс тупса палăртăр.

а) ылтăн çӳç; б) ылтăн пулă;

ă) ылтăн алă; в) ылтăн çĕрĕ.

2. Панă сăмах майлашăвĕсенчен тӳрĕ пĕлтерĕшлине тĕрĕс тупса палăртăр.

а) кĕмĕл сулă; б) кĕмĕл чечек;

ă) кĕмĕл сасă; в) кĕмĕл сывлăм.

3. Панă сăмах майлашăвĕсенчен тӳрĕ пĕлтерĕшлине тĕрĕс тупса палăртăр.

а) шăл туни; б) кĕрепле шăлĕ;

ă) ыхра шăлĕ; в) тура шăлĕ.

II. 1. *Шăвар* сăмаха куçăмлă пĕлтерĕшпе усă курнă тĕслĕхе тĕрĕс тупса палăртăр.

а) çумăр калчасене лайăх шăварчĕ;

ă) юнпа шăварнă çĕр;

б) лашана кашăкпа шăвармаççĕ;

в) шăварман çĕрсем.

2. *Ӳстер* сăмаха куçăмлă пĕлтерĕшпе усă курнă тĕслĕхе тĕрĕс тупса палăртăр.

а) чечек ӳстер;

ă) ачасене тĕрĕс пăхса ӳстерни;

б) авторитета ӳстер;

в) нумай çул хушши ӳснĕ йывăççем.

3. *Кукăр* сăмаха куçăмлă пĕлтерĕшпе усă курнă тĕслĕхе тĕрĕс тупса палăртăр.

а) кукăр вĕçлĕ патак;

ă) кукăр ураллă çын;

б) çул кукăрĕ;

в) кукăр алăллă çын.

## Синонимсем. Антонимсем

I. 1. Панă тĕслĕхсенчен хăшĕ *начар* сăмахăн синонимĕ пулмасть?

а) ырхан; б) самăр;

ă) хыткан; в) имшер.

2. Панă тĕслĕхсенчен хăшĕ *хитре* сăмахăн синонимĕ пулмасть?

а) хӳхĕм; б) сарă (хĕр);

ă) чипер; в) сăнсăр.

3. Панă тĕслĕхсенчен хăшĕ *маттур* сăмахăн синонимĕ пулмасть?

а) хастар; б) патвар;

ă) паттăр; в) ырхан.

II. 1. Ваттисен сăмахĕнче хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупса палăртăр.

*Мулкачăн хăлхи вăрам та, хӳри – кĕске.*

а) хăлхи – хӳри; б) хӳри – вăрăм;

ă) хăлхи – кĕске; в) вăрăм – кĕске.

2. Ваттисен сăмахĕнче хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупса палăртăр.

*Чаплă хĕрĕн чап каять, начар хĕрĕн ят каять.*

а) чаплă – начар; б) чаплă – ят;

ă) чап – ят; в) начар – чап.

3. Ваттисен сăмахĕнче хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупса палăртăр.

*Шыв анаталла тапать, çын тăвалла тапаланать.*

а) шыв – çын; б) тапать – тапаланать;

ă) анаталла – тăвалла; в) çын тапаланать.

III. 1. Хăш ретре синоним пулман сăмахсем пур?

а) тӳрĕ, яштака, йăрăс; б) кахал, наян, юлхав;

ă) хăюллă, хастар, вăйлă; в) мăнтăр, самăр, шыçмак.

2. Хăш ретре синоним пулман сăмахсем пур?

а) уй, хир, пусă; б) рет, йĕрке, ретлĕ;

ă) пысăк, мăнă, шултра; в) тунсăх, кичем, салху.

3. Хăш ретре синоним пулман сăмахсем пур?

а) çĕмĕр, ват, аркат; б) сывал, тӳрлен, чĕрĕл;

ă) тавлаш, тупăш, çапăç; в) лаша, ут, урхамах.

### Омонимсем

I. 1. Омоним пулакан сăмаха тупăр.

1) Вăл кайнăранпа пĕр сехет иртрĕ.

2) Тĕлĕннипе куç харшийĕсене пĕрсе лартрĕ.

3) Кайăксем пĕр! вĕçсе кайнă сасă сывлăшра илтĕнчĕ.

4) Пĕр енчен амăшĕ тĕрĕс каланине ăнланчĕ чŭрече умĕнче ларакан хĕрача.

а) пĕр; б) лар;

ă) ирт; в) кай.

2. Омоним пулакан сăмаха тупăр.

1) Виç пуслăх ĕç те пурнăçлайман вăл паян.

2) Ир-ирех ял хĕрарăмĕсем пусă патне анчĕç.

3) Хунямăш тăпри çине кинĕ пусать.

4) Паян ирех сысна пусма шутласа хунă вĕсем.

а) ир; б) вăл;

ă) пус; в) паян.

3. Омоним пулакан сăмаха тупăр.

1) Хĕлле те, çулла та пĕр сăрă.

2) Сăрă хурт пек пурăн.

3) Хитререх курăнас тесе вăл хăйю сăрнă çĕлĕк тăхăнчĕ.

4) Сивĕ çĕртен ăшша кĕнипе сăр! турĕ пĕтĕм шăм-шак.

а) пĕр; б) сăр;

ă) çĕр; в) тăхăн.

## Словарьсемпе усă курасси

I. 1. Йывăç ячĕсене вырăсла тĕрĕс мар куçарнă тĕслĕхе тупăр.

а) хурăн – береза; б) юман – дуб;

ă) çŭçе – ива; в) йăмра – сосна.

2. Кайăк ячĕсене вырăсла тĕрĕс мар куçарнă тĕслĕхе тупăр.

а) шăпчăк – соловей; б) уйăп – синичка;

ă) куккук – куккушка; в) карăш – коростель.

3. Тискер кайăк ячĕсене вырăсла тĕрĕс мар куçарнă тĕслĕхе тупăр.

а) хăнтăр – хомяк; б) пăсара – ласка;

ă) йĕке хŭре – бурундук в) тилĕ – лиса.

## Профессионализмсем

I. 1. Учительсем анлă усă куракан сăмахсен ушкăнне тĕрĕс палăртăр.

а) тетрадь, кĕнеке, йывăç;

ă) линейка, ручка, кăранташ;

б) шкул, библиотека, клуб;

в) класс, кабинет, малти пÿлĕм.

2. Врачсем анлă усă куракан сăмахсен ушкăнне тĕрĕс палăртăр.

а) бинт, марля, тутăр;

ă) рентген, рецепт, тĕкĕр;

б) скальпель, пинцет, шприц;

в) бинт, спирт, чей.

3. Шоферсем анлă усă куракан сăмахсен ушкăнне тĕрĕс палăртăр.

а) автобус, троллейбус, самолет;

ă) мăлатук, ножовка, сава;

б) сцеплени, зажигани, уровень;

в) руль, педаль, тормоз.

## Йышăннă сăмахсем

I. 1. Тĕп чăваш сăмахĕсен ушкăнне тупса палăртăр.

а) çын, ача, автан;

ă) чейник, ещĕк, кил;

б) алсиш, алшăлли, фляга;

в) директор, çамка, чышкă.

2. Тĕп чăваш сăмахĕсен ушкăнне тупса палăртăр.

а) ылхан, ылтăн, хăйчикки;

ă) ыйхă, шапаш, факультет;

б) халиф, кайăк, утарçă;

в) усламçă, тунсăх, сăвай;

3. Тĕп чăваш сăмахĕсен ушкăнне тупса палăртăр.

а) милиции, агроном, председатель;

ă) халва, помидор, хăяр;

б) роза, тунката, пуçаруçă;

в) халап, ÿслĕк, ÿт.

II. 1. Йышăннă сăмахсен ушкăнне тĕрĕс палăртăр.

а) кăвакал, хур, чăх; б) чавса, пĕрене, йывăç;

ă) компот, чей, сăмса; в) апат, сĕтел, чашăк.

2. Йышăннă сăмахсен ушкăнне тĕрĕс палăртăр.

а) хак, хыр, чăрăш; б) ÿхĕ, хурчка, кăйкăр;

ă) фазан, лантăш, тундра; в) çăка, юман, хурама.

3. Йышăннă сăмахсен ушкăнне тĕрĕс палăртăр.

а) уçланкă, тупă, тупа; б) утаман, çитсă, реет;

ă) çурçĕр, çитĕнÿ, çирĕп; в) татулăх, юмах, сăрă.

## Кивелнĕ сăмахсемпе çĕнĕ сăмахсем. Диалект сăмахĕсем

I. 1. Кивелнĕ сăмахсене тепĕр майлă ... теççĕ.

а) неологизмсем; б) синонимсем;

ă) архаизмсем; в) омонимсем.

2. Çĕнĕ сăмахсене тепĕр майлă ... теççĕ.

а) неологизмсем; б) антонимсем;

ă) архаизмсем; в) омонимсем.

3. Диалект сăмахĕсем тесе ... калаççĕ.

а) йышăннă сăмахсене; б) кивелнĕ сăмахсене;

ă) вырăнти калаçу сăмахĕсене; в) çĕнĕ сăмахсене.

II. 1. Кивелнĕ сăмахсен ушкăнне тĕрĕс палăртăр.

а) алтăр, кăкшăм, чÿлмек; б) чашăк, кашăк, вилка;

ă) кĕленче, апат, курка; в) чÿлмек, пушмак, туфли.

2. Çĕнĕ сăмахсен ушкăнне тĕрĕс палăртăр.

а) эрне кун, юн кун, вырсарни кун;

ӑ) ĕссĕмлĕх, уççӑнлӑх, янтал;

б) йĕрлĕк, хайлӑк, вулавӑш;

в) арча, шкаф, тумбочка.

3. Диалектизмсен ушкӑнне тĕрĕс тупса палӑртӑр.

а) асатте, мамак, маçак;

ӑ) кишĕр, шĕкĕнтĕр, мӑркка;

б) орам, сехет, çӑкӑр;

в) атте, анне, апай.

## 2. 4. СĂМАХ ТЫТĂМĔПЕ ПУЛĂВĔ. ОРФОГРАФИ

### Сăмах тытăмĕ тата аффикссем

I. 1. Сăмах тымарĕнчен çеç тăракан тĕслĕхсене тĕрĕс палăртăр.

а) пĕл, вăй, кăк, хăват, çăка;

ă) çыру, шутла, юманлăх, пулăçă, илемлĕ;

б) лар, çыр, ташла, вула, выля;

в) хурамалăх, улăх, çаран, çырма, кĕрнеклĕ.

2. Аффикс хушăнса пулнă сăмахсен ушкăнне тĕрĕс палăртăр.

а) ларкăч, сăмахлăх, юмах, илем, вăйлă;

ă) вулав, ентеш, тавлашу, йĕрле, каварлаш;

б) çын, çынлăх, ăсату, ачалăх, вĕркĕч;

в) йытă, кушак, автан, ача, чĕпĕ.

II. 1. Панă сăмахăн тымарне тĕрĕс палăртăр.

*çынлăхсăррисемпе*

а) çынлăхсăррисем; б) çын;

ă) çынлăхсăр; в) çынлăх.

2. Панă сăмахăн тымарне тĕрĕс палăртăр.

*çыраканнисемсĕр*

а) çыраканни; б) çыракан;

ă) çыраканнисем; в) çыр.

3. Панă сăмахăн тымарне тĕрĕс палăртăр.

*вĕрентӳçĕсемпеле*

а) вĕрентӳ; б) вĕрентӳçĕсем;

ă) вĕрен; в) вĕрентӳçĕ.

### Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффикссем

I. 1. Скобкăри сăмахсем çумне кирлĕ аффикссем хушса предложение тĕрĕс йĕркелĕр.

*Пурăнăç палкать, (шыв) та путманскер, (вут) та çунманскер, (вăрман) хăйĕн (çамрăклăхĕ) ӳстерет.* (Е. Лисина.)

а) –а, -а, -а, -пе; б) –ра, -ра, -а, -пе;

ă) –а, -ра, -а, -пе; в) –ра, -ра, -ра, -пе.

2. Скобкăри сăмахсем çумне кирлĕ аффикссем хушса предложение тĕрĕс йĕркелĕр.

*Хыт хуралнă пĕлтĕрхи эрĕм туни (айĕ) çĕнĕ (курăк) ашкăрать: (чавкапуç) хăлаçланать, шурути, сÿсен халь-халь шерепе ярассăн вĕлтĕртетеççĕ, йĕс тура (курăк) – (çунатти) сарнă симĕс кайăк евĕрлĕ, ут-кăшкар тĕмĕсем кĕренленнĕ. (Е. Лисина.)*

а) –нче, -, -ĕ, -ки, -не; б) –пе, -, -а, -, -не;

ă) –пе, -, -, -ĕ, -не; в) –ĕ, -ĕ, -а, -, -не;

3. Скобкăри сăмахсем çумне кирлĕ аффикссем хушса предложение тĕрĕс йĕркелĕр.

*Хула (çул) шăтарма вăй çитерекен шăнăр (курăк) кустăрма айĕнче лапчăнать, çулçи амансан та (пурăнăç) парăнмасть – (тымар) юлать, тарăнланать, çулçă (вырăн) çулçă кăларать. (Е. Лисина.)*

а) –не, -ĕ, -, -, -не; б) –не, -ĕ, -а, -, -не;

ă) –ĕ, -ĕ, -, -, -не; в) –ĕ, -ĕ, -а, -, -не.

II. 1. Хăш тĕслĕхре сăмахсене пару падежĕн аффиксĕ çыхăнтарать?

а) вăй... çил; б) клуб... таврăн;

ă) шкул... кай; в) Петĕр кушак... .

2. Хăш тĕслĕхре сăмахсене камăнлăх падежĕн аффиксĕ çыхăнтарать?

а) тÿпе... пĕлĕт; б) шăнкăрав... пулчĕ;

ă) ача... çуни; в) ластик... хурат.

3. Глагол çумне аффикс хушăнса пулнă япала ятне тĕрĕс палăртăр.

а) апат; ă) çĕнĕлĕх; б) çыру; в) ташла.

4. Паллă ячĕ çумне аффикс хушăнса пулнă япала ятне тĕрĕс палăртăр.

а) хитрелет; ӑ) чӗнӳ; б) ҫирӗклӗх; в) ҫамрӑклӑх.

5. Япала ячӗ ҫумне аффикс хушӑнса пулнӑ япала ятне тӗрӗс палӑртӑр.

а) хурӑнлӑх; ӑ) ҫапӑҫу; б) хитрелӗх; в) апатлан.

6. Япала ячӗ ҫумне аффикс хушӑнса пулнӑ глагола тӗрӗс палӑртӑр.

а) калаҫ; ӑ) сӑмахла; б) ҫӗнӗлле; в) ларкӑч.

7. Паллӑ ячӗ ҫумне аффикс хушӑнса пулнӑ глагола тӗрӗс палӑртӑр.

а) илемлет; ӑ) аталану; б) вулакан; в) ӑнлӑх.

III. 1. Панӑ сӑмахӑн тӗпне тӗрӗс палӑртӑр.

*вӗрентекенсемпеле*

а) вӗрентекенсем; б) вӗрен;

ӑ) вӗрент; в) вӗр.

2. Панӑ сӑмахӑн тӗпне тӗрӗс палӑртӑр.

*кураканнисенчен*

а) кураканни; б) куракан;

ӑ) курак; в) кур.

3. Панӑ сӑмахӑн тӗпне тӗрӗс палӑртӑр.

*ҫӗленменнисене*

а) ҫӗле; б) ҫӗленмен;

ӑ) ҫӗлен; в) ҫӗленменни.

## Аффиксем хушӑнса пулнӑ сӑмахсене тӗрӗс ҫырасси

I. 1. –Лӑ(-лӗ) аффикс хушӑнсан икӗ л ҫырмалли сӑмахсене тӗрӗс палӑртӑр.

а) кӑмӑл, туйӑм, серепе; б) купӑс, кӗпе, тухья;

ӑ) ача, укҫа, хӗвел; в) мухтав, кил, чап.

2. –Ла(-ле) аффикс хушӑнсан икӗ л ҫырмалли сӑмахсене тӗрӗс палӑртӑр.

а) кăшăл, çĕнĕ, укçа;  б) арçын, тутăр, эмел;

ă) çĕнтерÿ, вăрçă, кĕтес;  в) пукане, çамрăк, юман.

3. –Лăх(-лĕх) аффикс хушăнсан пĕр л çырмалли сăмахсене тĕрĕс палăртăр.

а) çăмăл, кăшăл, çÿçе;  б) çăкăр, кăмăл, куç;

ă) йăмра, хурăн, ывăл;  в) ырă, пулас, пултару.

4. Тĕрлĕ аффикс хушса çырнă сăмах ушкăнĕсенче йăнăшшисене тупăр.

а) пулăçă, çунатлă, сунасла;

ă) кăвакăн, ĕçлетер, вулатар;

б) йăмраллă, йăмралăх, шешкĕллĕ;

в) тĕслĕх, тăвăллăн, хыттăн.

## Хутлă сăмахсем, вĕсен тĕсĕсем

I. 1. Сăмахсем кĕскелсе пĕрлешнĕ тĕслĕхсен ушкăнне палăртăр.

а) кĕркунне, çуркунне, райхаçат;

ă) алсиш, армути, анкарти;

б) улмуççи, панулми, автовокзал;

в) литкаç, килхушши, сакай.

2. Ятарласа кĕскетсе тунă сăмахсен ушкăнне палăртăр.

а) кĕçнерни, çăварни, мăнкун;

ă) ялкор, райхаçат, район;

б) телеюрă, радиопередача, телехыпар;

в) литпĕрлешÿ, чĕркуççи, кĕçĕр.

3. Аббревиатура пулакан сăмахсене тĕрĕс палăртăр.

а) РЛИ, аппарат, çăраççи;

ă) ЧПУ, сельпо, завхоз;

б) ЧППУ, редколлеги, пединститут;

в) ШЁМ, райцентр, электролампочка.

II. 1. Предложенири хутлă сăмахăн тĕсне палăртăр.

*Колхоз председателĕсен тĕл пулсан пĕр калаçу – хуçалăхсем пирки: кам мĕнле тытса тăрать?* *(С. Павлов.)*

а) сăмахсем кĕскелсе пĕрлешнĕ сăмах;

ă) аббревиатура;

б) ятарласа кĕскетсе тунă сăмах;

в) мăшăр сăмах.

2. Предложенири хутлă сăмахăн тĕсне палăртăр.

*Акă ĕнтĕ капăрлатнă туй кӳми – алкум вĕçĕнче.*

*(В. Эльби.)*

а) сăмахсем кĕскелсе пĕрлешнĕ сăмах;

ă) аббревиатура;

б) ятарласа кĕскетсе тунă сăмах;

в) мăшăр сăмах.

3. Предложенири хутлă сăмахăн тĕсне палăртăр.

*Вĕсене (рабочисене) хатĕрлеме çĕр-шыв ФЗОсем уçнă.*

*(В. Эльби.)*

а) сăмахсем кĕскелсе пĕрлешнĕ сăмах;

ă) аббревиатура;

б) ятарласа кĕскетсе тунă сăмах;

в) мăшăр сăмах.

## Мăшăр сăмахсем

I. 1. Мăшăр сăмахсен ушкăнне тĕрĕс тупса палăртăр.

а) урлă-пирлĕ, çĕр-шыв, пахча çимĕç;

ă) сĕтел-пукан, савăт-сапа, алшăлли;

б) ӳрĕк-сӳрĕк, хăш-пĕр, тĕрĕс-тĕкел;

в) атă-пушмак, кĕпе-йĕм, кунран-кун.

2. Мăшăр сăмахсен ушкăнне тĕрĕс тупса палăртăр.

а) аш-какай, вата-вĕтĕ, сĕт-çу;

ă) лару-тăру, ир-каç, анкарти;

б) хĕн-хур, пит-куç, урай;

в) пир-авăр, тутти-маси, хĕрарăм.

3. Мăшăр сăмахсен ушкăнне тĕрĕс тупса палăртăр.

а) унта-кунта, апат-çимĕç, арçын ача;

ă) улăх-çаран, çăкăр-тăвар, хĕрача;

б) ўрĕк-сўрĕк, урлă-пирлĕ, тунти кун;

в) пир-авăр, суту-илў, выльăх-чĕрлĕх.

II. 1. Предложенири мăшăр сăмахсене тĕрĕс палăртăр.

*Тăвată çула тăсăлнă вăрçă нуши кил-çуртран, арча-çўпçерен ним хăвармиччен шăлса тухнă пек туйăннăччĕ.* (В. Эльби.)

а) тăвată çула; б) арча-çўпçерен;

ă) кил-çуртран; в) кил-çуртран, арча-çўпçерен.

2. Предложенири мăшăр сăмахсене тĕрĕс палăртăр.

*Çарти тусăм мана хирĕçлемерĕ, пит-куçне хура сулхăн та кармарĕ.* (В. Эльби.)

а) тусăм; б) пит-куçне;

ă) çарти тусăм; в) хура сулхăн.

3. Предложенири мăшăр сăмахсене тĕрĕс палăртăр.

*Вĕсенче мĕнле майпа вăйлă тырă-пулă туса илмеллине, йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмеллине вĕрентĕç.* (В. Эльби.)

а) мĕнле майпа, вăйлă;

ă) тырă-пулă, выльăх-чĕрлĕх;

б) вăйлă тырă-пулă;

в) йышлă выльăх-чĕрлĕх.

## Икĕ хут калакан сăмахсем

I. 1. Панă тĕслĕхсенче икĕ хут калакан сăмахсене тĕрĕс палăртăр.

а) хир-хир, пин-пин, сап-сарă;

ă) ял-ял, курки-куркипе, сарă-сарă;

б) хĕрлĕ-хĕрлĕ, хуп-хура, кăн-кăвак;

в) чашки-чашки, чашăк-тирĕк, чăн-чăн.

2. Панă тĕслĕхсенче икĕ хут калакан сăмахсене тĕрĕс палăртăр.

а) кăн-кăвак, çĕр-çĕр, арчи-арчипе;

ă) чăн-чăн, шап-шурă, пит-куç;

б) хура-хура, сапаки-сапакипе, витри-витри;

в) йăлтăр-ялтăр, яп-янкăр, килрен киле.

3. Панă тĕслĕхсенче икĕ хут калакан сăмахсене тĕрĕс палăртăр.

а) ламран лама, хир-хир, симĕс-симĕс;

ă) кĕсйи-кĕсйипе, хăмăр-хăмăр, сип-симĕс;

б) уй-уй, çаранĕ-çаранĕпе, йăхран йăха;

в) тĕрки-тĕркипе, михи-михипе, тенки-тенки.

II. 1. Предложенири икĕ хут калакан сăмахсене тупса палăртăр.

*Анчах чăн-чăн савăнăç çитсен тем те тупăнать-мĕн хĕрсен: вĕр çĕнĕ тутăр та, лента-хăю та, пурçăн та, шăрçа-тенкĕ те...*

*(В. Эльби.)*

а) чăн-чăн; б) лента-хăю;

ă) вĕр çĕнĕ; в) шăрçа-тенкĕ.

2. Предложенири икĕ хут калакан сăмахсене тупса палăртăр.

*Астăватăп-ха вăрçăччен пире хĕп-хĕрлĕ питлĕ вĕтĕ пан улмийĕсене витри-витрипе парнеленине.* *(В. Эльби.)*

а) астăватăп-ха; б) витри-витрипе;

ă) хĕп-хĕрлĕ; в) пан улмийĕсене.

3. Предложенири икĕ хут калакан сăмахсене тупса палăртăр.

Кас-кас *сăмах-юмахăн вĕçĕ-хĕрри те пуласссăн туйăнмарĕ.*

*(В. Эльби.)*

а) сăмах-юмахăн; б) пулассăн туйăнмарĕ

ă) вĕçĕ-хĕрри; в) кас-кас.

# ХУРАВСЕМ

## Синтаксис. Пунктуаци

### Предложени, унӑн членӗсем. Пӗр йышши членсем, вӗсене чарӑну паллисемпе уйӑрасси

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | 1) б; 2) ӑ; | 1) в; 2) б; | 1) б; 2) б. |
| II | б | в | ӑ |
| III | а | б | б |

### Сӑмах майлашӑвӗ

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | а | б | б |
| II | ӑ | а | б |
| III | в | б | ӑ |

### Сӑнлав. Калав. Ӑслав

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ӑ | б | а |

### Хутсӑр предложени

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | а | ӑ | б |

### Калуллӑ, ыйтуллӑ, хистевлӗ предложенисем. Кӑшкӑруллӑ предложени

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | 1) б; 2) ӑ; | 1) а; 2) ӑ; | 1) ӑ; 2) ӑ. |
| II | б | в | а |
| III | ӑ | б | а |

### Текст. Унӑн пайӗсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ӑ | ӑ | б |
| II | б | а | ӑ |

Текст теми, тĕп шухăшĕ

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | в | ă | в |

Предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем. Ансăр тата анлă предложенисем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | ă | б |
| II | в | а | б |
| III | ă | а | б |
| IV | а | в | б |
| V | а | б | в |
| VI | а | а | ă |

Пĕр йышши членлă предложенисем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | б | ă | а |
| II | ă | в | в |

Текст планĕ

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | в | ă |

Чĕнӳ сăмахĕсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | в | а | ă |

Калаçу чĕлхи. Илемлĕ чĕлхе. Официаллă чĕлхе

| | 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|---|
| I | А | ă | в | б |

Хутлă предложени. Союзсăр хутлă тата союзлă хутлă предложенисем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | б | а |
| II | 1) б; 2) а; | 1) в; 2) б; | 1) в; 2) ă. |

Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | а | б |
| II | ă | а | в |

**Фонетика. Графика. Орфографи**

Алфавит

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
|---|---|---|---|---|---|
| I | б | а | ă | ă | б |
| II | ă | а | б | - | - |
| III | а | ă | а | - | - |

Уçă сасăсем, вĕсен мăшăрлăхĕ

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | ă | б |
| II | б | б | ă |
| III | а | б | б |

Уçă сасăсен килĕшĕвĕ

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | в | ă | ă |
| II | ă | б | в |
| III | б | ă | б |
| IV | б | в | а |

Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | б | в | а |
| II | ă | б | в |

Хупă сасăсем

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
|---|---|---|---|---|---|
| I | а | б | в | ă | б |

Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенчи
хупă сасăсен хытăлăхĕпе çемçелĕхĕ

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | ă | б |

Хупă сасăсем вăрăммăн илтĕнни, ăна çыруру палăртасси

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | ă | а |
| II | б | ă | в |
| III | б | ă | в |

Ялан янравлă хупă сасăсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | а | а | - |
| II | в | ă | б |
| III | б | ă | а |

*К, п, с, ç, т, х, ч. ш* хупă сасăсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | б | ă |
| II | в | в | ă |

Вырăс чĕлхинчен йышăннă сăмахсенче
*б, г, д, ж, з* сас паллисене çырасси

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
|---|---|---|---|---|---|
| I | б | в | ă | ă | а |
| II | а | в | б | - | - |

Ударени (пусăм)

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | в | а |
| II | в | в | в |

Сăмахри ă, ĕ сасăсем тухса ÿкме пултарни

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | б | а | б |
| II | ă | а | в |

## Лексика

Мĕн вăл лексика? Сăмах пĕлтерĕшĕ

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | а | в | в |

Пĕр пĕлтерĕшлĕ тата нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | а | ă | б |
| II | ă | ă | а |

Сăмахсен тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | в | а | а |
| II | ă | б | в |

Синонимсем. Антонимсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | б | в | в |
| II | в | а | ă |
| III | ă | б | ă |

Омонимсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | а | ă | б |

Словарьсемпе усă курасси

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | в | б | ă |

Профессионализмсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | б | в |

Йышăннă сăмахсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | а | а | в |
| II | а | ă | б |

Кивелнĕ сăмахсемпе çĕнĕ сăмахсем. Диалект сăмахĕсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | а | ă |
| II | а | б | ă |

Сăмах тытăмĕпе сăмах пулăвĕ. Орфографи

Сăмах тытăмĕ тата аффикссем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | а | ă | - |
| II | б | в | ă |

Сăмаха улăштаракан тата сăмах тăвакан аффиксем

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| I | б | ă | а | - | - | - | - |
| II | ă | ă | б | в | а | ă | а |
| III | ă | в | ă | - | - | - | - |

Аффиксем хушăнса пулнă сăмахсене тĕрĕс çырасси

| | 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|---|
| I | ă | а | в | ă |

Хутлă сăмахсем, вĕсен тĕсĕсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | б | ă |
| II | ă | а | ă |

Мăшăр сăмахсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | б | а | в |
| II | в | б | ă |

Икĕ хут калакан сăмахсем

| | 1 | 2 | 3 |
|---|---|---|---|
| I | ă | б | в |
| II | ă | б | в |

# ТУПМАЛЛИ


Ум сăмах........................................................................ 2

I. Тест – пĕлĕве тĕрĕслемелли мел........................................ 4

II. Чăваш чĕлхи пĕлĕвне тĕрĕслемелли тестсем........................ 8

2.1. Синтаксис. Пунктуаци................................................. 9

2.2. Фонетика. Графика. Орфографи.................................... 36

2.3. Лексика........................................................................ 51

2.4. Сăмах тытăмĕпе пулăвĕ. Орфографи.............................. 59

Тестсен хуравĕсем............................................................ 68

Учебное издание

Андреева Евдокия Александровна
Николаева Ирина Васильевна

Чувашский язык. 5 класс. Сборник тестов

Учебно-методическое пособие

Подписано в печать 30.05.08. Формат 64х84/16.
Бумага писчая. Печать оперативная. Усл. печ. л. 4,8.
Тираж 100 экз. Заказ № 2398.

ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

Отпечатано на участке оперативной полиграфии
ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И.Я. Яковлева»
428000, Чебоксары, ул. К. Маркса, 38

25.

орфографи

Ё

Ç

пуплев

чĕлхе

Ă

калаçу

Ӳ

предложени